1938 АПРЕЛ 27 ЙУНКУН
96 (4909)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕҫтăвкомăн хаҫачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Совет халăхĕ большевиксен партийĕ йертсе пынипе хамăр ҫĕршыв ирĕклĕхне тата никама пăхăнманлăхне кĕрешсе илчĕ,—сывă пултăр Совет халăхĕн моральлĕ тата политикăлă пĕрлĕхĕ!

(ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1938 ҫулхи Майăн 1-мĕшне иртерме панă лозунгсенчен)

Ҫураки вăхăтĕнчи уйхир ĕҫĕсен малтанхи кунĕсем ҫинчен

ПСК(б)П Чăваш Обком бÿровĕ 1938 ҫулхи апрелĕн 23-мĕшĕнче йышăннă постановлени

Ҫураки вăхăтĕнчи уйхир ĕҫĕсен малтанхи кунĕсем ҫакна кăтартса параҫҫĕ: хăшпĕр районсем—уйрăмах Йетĕрне, Канаш, Вăрмар, Шамăршă районĕсем—ҫурхи уйхир ĕҫĕсене чылай ҫитменлĕхсемпе тытăннă.

Ҫав районсемех ыраш калчи ҫине клевĕр акас плана тултарассине пурнăҫламаҫҫĕ: Йетĕрне районĕ план тăрăх 2.400 гектар акас вырăнне 1.380 гектар ҫеҫ акнă, Вăрмар районĕ планпа 4.200 гектар акас вырăнне 2000 гектар кăна акнă.

Канашпа Шăмăршă районĕсем те ҫавăн пекех клевĕр акас плана пурнăҫа кĕртмеҫҫĕ. Йаровизаци ĕҫĕ те пурнăҫа кĕмесĕр йулас хăрушлăх умĕнче тăрать. Тымар ҫимĕҫ вăрлăхĕсене снабжени организацийĕсен склачĕсенчен чылай районсем ку таранччĕнех илсе каймаҫҫĕ. Уйрăм районсен руководителĕсем йаровизаци ĕҫне тĕрĕс те тимлĕн организацилес вырăнне, суйса улталас ҫул ҫине тăнă. Сăмахран, Йĕпреҫ районĕ пĕр Клĕмкасси колхозĕнче кăна 80 центнĕр вăрлăх йаровизацилеме хывнă тесе пĕлтерет, чăннипе ку колхозра йаровизацилеме пĕр килограм та хывман, пĕтĕм Йĕпреҫ районĕнче йаровизацилеме 50 центнĕр ҫеҫ хывнă. Куславкка районĕнче йаровизацине йачĕшĕн ҫеҫ тăваҫҫĕ: плана тултарас тесе, йаровизацилес вырăнне вăрлăха ахаль кăна йĕпетеҫҫĕ. Районсен руководителĕсем калчасене ҫуркунне сÿрелесси тата кĕрхи калчасене апат парасси пек кирлĕ ĕҫсем ҫине те ҫавăн пекех тимлĕн ҫаврăнса пăхмаҫҫĕ. Ҫак ĕҫсене туса иртерессине уйрăмах Шăмăршă, Патăрйел, Турхан, Ҫĕрпÿ, Куславкка тата Вăрмар районĕсенче начар организацилене. Ҫав районсем хăйсене государствă панă азотлă хаклă удобренисене ку таринччĕнех турттарса кайман тата ҫавна валли кивҫен панă укҫасемпе усă курман. (Ҫĕрпÿ районĕ 120 тоннă, Куславкка районĕ 116 тоннă удобрени турттарса кайман). Йалхуҫалăх снабжени склачĕсенче халĕ те турттарса кайман вăрлăх чÿхемели материалсемпе нитрагин пур, вĕсене Кувакинă, Тутаркас, Ишлей тата ытти районсем валли хатĕрленĕ. Хăш-пĕр МТС директăрĕсем, уйрăмах Патăрйел МТС директăрĕ Воронăв й. трактăрсене йусас ĕҫ ҫине тимлĕн пăхманнипе, йусанă трактăрсен пĕр пайĕн пысăк ҫитменлĕхсем пур.

ПСК(б)П Обкомĕ ҫавăн пекех тата партипе советăн уйрăм районсенчи руководителĕсем колхозсенче чăн-чăн социалисăмлă ăмăрту организацилес ĕҫ ҫине тата уйрăмах колхозри бригадăсемпе звеносен ăмăртуне организацилес ĕҫ ҫине тимлĕн пăхманнине палăртать. Ҫапла, сăмахран, Йĕпреҫ районĕнче 66 колхозран 22 колхоз ҫеҫ ăмăртать, колхозсенчи 163 бригадăран 26 бригада ҫеҫ ăмăртать. Йетĕрне районĕнче 90 колхозран 69 колхоз ăмăртать, ҫак районсенчи ăмăртакан бригадăсен хисепĕ никама та паллă мар. Массăлă-политикăлă ĕҫе ҫителĕклĕ организацилемен.

ПСК(б)П Обком бÿровĕ ҫапла йышăнать:

1. Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссарне Коротков йулташа, ПСК(б)П райкомĕсен ҫекретарĕсене, райĕҫтăвкомсен председателĕсене ака ĕҫĕн малтанхи кунĕсенче палăртнă ҫитменлĕхсене халех пĕтерме хушас тата мĕн пур колхозсенче массăлă ака ĕҫне организацилĕн пуҫласа йама, ĕҫре пысăк пахалăх тума хушас.

2. Нумай ҫул хушши ÿсекен курăксене акас срукҫем тухса пынă май, ПСК(б)П Обкомĕ райкомсене, райĕҫтăвкомсене тата ҫĕрĕҫ оргăнĕсен руководителĕсене кашни колхоз уйрăмăн тата пĕтĕм район клевĕр акас тата нумай ҫул хушши ÿсекен ытти курăксем акас плана пĕр сăмахсăрах тултарма мĕн пур ĕҫсене туса иртерме хушать.

3. ПСК(б)Партин Ҫĕрпÿ, Куславкка, Шупашкар, Улатăр тата Пăрачкав районĕсенчи райком ҫекретарĕсене, райĕҫтăвкомсен председателĕсене тата райҫĕрĕҫ пайĕсен заведуйушчисене хăйсене паракан вăрлăх чÿхемели материалсене, нитрагина тата минераллă удобренисене апрелĕн 25-мĕш тĕлне йалтах турттарса кайма, вĕсемпе тĕрĕс усă курмала тума, пуринчен ытла кĕрхи калчасене апат панă ҫĕрте усă курма хушас.

4. ПСК(б)П райкомĕсен ҫекретарĕсене, райĕҫтăвкомсен председателĕсене, райҫĕрĕҫ пайĕсен заведуйушчисене тата МТС директăрĕсене ҫак ҫинчен асăрхаттарас: калчасене сÿрелесси, кĕрхи калчасене апат парасси, йаровизацилесси, вăрлăхсене чÿхесси пек кирлĕ ĕҫсене пурнăҫа кĕртессине кăшт та пулсан пурнăҫламасанах йе вăл ĕҫсене йачĕшĕн кăна туса иртерме хăтлансан, Обком вĕсем йалхуҫалăхне чăннипех ҫĕклентерессишĕн, колхозсене ҫирĕплетессишĕн тата пысăк тухăҫлă тырпулшăн ĕҫре большевикла кĕрешме пĕлмеҫҫĕ, тесе хаклать.

5. ПСК(б)П Обкомĕ парти, совет тата ҫĕрĕҫ оргăнĕсен руководителĕсене, йалхуҫалăх специалисĕсене пысăк тухăҫлă тырпулшăн анлă, чăн-чăн большевикла ăмăрту сарса, колхоз производствинче ĕҫĕн стахановла метăчĕсемпе пысăккăн усă курса, ҫуракине кĕске срукра, 6—7 кун хушшинче пысăк пахалăхпа иртермеле тума хушать, ҫапла тунипе Тутар тата Мордва республикĕсемпе пыракан ăмăртура малти рете тухмала пултăр.

ПСК(б)П Обком ҫекретарĕ **Г. ИВАНОВ**.

РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен Тĕп Суйлав Комиҫҫинче

Ҫак ҫулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен Тĕп Суйлав Комиҫҫин ларăвĕ пулса иртнĕ.

Комиҫҫи суйлав докумĕнчĕсене пăхса тухса, вĕсен формисене йышăнна: РСФСР Верховнăй Советне суйламали суйлав бÿллетенĕ (ҫутă шупка-кăвак тĕслĕ); суйлавҫă суйлавҫăсен спискине пичетлесе кăларнă хыҫҫăн урăх вырăна куҫса кайсан „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 16-мĕш статйи тăрăх памали сасăлама права паракан удостоверени; бÿллетенсене валли конверт; суйлавҫăсен спискисен формисем; РСФСР Верховнăй Советне суйланă чухне сасăлани ҫинчен участкăри тата округри суйлав комиҫҫийĕсем ҫыракан протоколсен формисем; участкăри тата округри суйлав комиҫҫийĕсем сасăлани ҫинчен ҫырнă протоколсем ҫумне хуракан шутлав листисен формисемпе РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлани ҫинчен памали удостоверени формиı.

РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен Тĕп Суйлав Комиҫҫийĕ мĕн пур участкăсенчи комиҫҫисем валли те суйлав йешчĕкĕсен пĕр пек образецне йышăнна—йăвăҫран тунă 85 сантиметр ҫÿлĕш тата 50×40 сантиметр сарлакĕш йешчĕк; унăн крышки ҫĕкленсе уҫăлмала, конвертсем йамали шăтăк пур. Йешчĕкпе крышкăн пичетлесе лартма металлран тунă петлĕсем пулмала.

Комиҫҫи ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕсене валли ҫак образецпа туса хатĕрлене суйлав йешчĕкĕсемпе цĕтĕмĕшпех усă курма кирлĕ тесе йышăнна.

Автономлă республикăсенче, РСФСР Верховнăй Совечĕпе Автономлă ССР Республикĕсен Верховнăй Советне суйланă ҫĕрте кашни суйлав участкинче суйлав йешчĕкĕсем иккĕ пулмала:

а) РСФСР Верховнăй Советне суйлама уйрăм йешчĕк. Ҫак йешчĕк ҫумне РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен Тĕп Суйлав Комиҫҫи ҫирĕплетнĕ образецлă конверт ҫыпăҫтармала, кунсăр пуҫне тата „РСФСР Верховнăй Советне суйламали суйлав йешчĕкĕ" тесе тĕрĕс ҫырни пулмала;

б) Автономлă республикăн Верховнăй Советне суйлама уйрăм йешчĕк. Ҫак йешчĕк ҫумне ҫÿлте асăннă йеверлĕ автономлă республикĕн Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен Тĕп Суйлав Комиҫҫи ҫирĕплетнĕ образецлă конверт ҫыпăҫтармала, кунсăр пуҫне „Автономлă СС Республикĕн Верховнăй Советне суйламали суйлав йешчĕкĕ" тесе ҫырни пулмала.

Комиҫҫи правителствă суйлав кампани валли уйăрса панă хутсене валеҫессипе вĕсене вырăнсене йарас ыйтăва, ҫавăн пекех тата суйлав округĕсемпе суйлав участкисене мĕн пур суйлав докумĕнчĕсене те ҫителĕклĕн парас ыйтăва пăхса тухнă.

(ТАСС).

И. Д. Папанин йулташ агитатăрсемпе пропагандиссен пухăвĕнче пулнă

Апрелĕн 25-мĕшĕнче Мускаври Октаберски суйлав округĕнчи агитатăрсемпе пропагандиссен пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен Тĕп Суйлав Комиҫҫи предҫедателĕн замеҫтителĕ Совет Сойуз Геройĕ И. Д. Папанин йулташ сăмах тухса каланă. Папанин йулташ куҫса ҫÿрекен пăр ҫинче пурăнни ҫинчен тата унта мĕнле ĕҫлесе пыни ҫинчен каласа кăтартнă. Унăн уҫăмлă сăмахне пухура пулнисем хĕрÿлĕн саламланă. Йулашкинчен вăл агитатăрсемпе пропагандиссене РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсене хатĕрленес ҫĕрте коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн ҫĕнĕ ҫĕнтерĕвне организацилес ҫĕрте активлăн хутшăнса ĕҫлеме чĕннĕ.

(ТАСС).

Суйлавсене ҫитĕнÿсемпе кĕтсе илетпĕр

СЕНТĔРВĂРРИ. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кун ҫинчен йышăннă постановленисене районри ĕҫхалăхĕ пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕ. Верховнăй Советсене суйламали кун—ийунĕн 26-мĕш кунĕ пулнине ырласа районри пур предприйатисенче, колхозсенче, шкулсенче, учрежденисенче митингсем пулса иртеҫҫĕ. Колхозсенче уйра суха сухалакансем хушшинче суйлав кунĕ ҫинчен каласа ăнлантараҫҫĕ. Районра пулса иртекен митингсенче пур ҫĕрте те РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне пысăк ҫитĕнÿсемпе кĕтсе илме пулса резолюцисем йышăнаҫҫĕ.

Апрелĕн 22-мĕшĕнче пулнă Вăрман ĕҫ техникумĕнчи студентсем хăйсен резолюцийĕнче „РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене епĕр лайăх хатĕрленетпĕр, суйлав саккунĕсене тĕплĕн вĕренсе ҫывăхри йалсенчи колхозсене кайса ăнлантаратпăр, кăҫалхи вĕренÿ ҫулне отличнă паллăна вĕҫлетпĕр" тесе йышăннă.

Г. Кольцов.

Ленин—Сталин парти ĕҫне вĕҫĕ-хĕррисĕр парăннă патриотсене суйлатпăр

ПАТĂРЙЕЛ. (Телефон тăрăх, хамăр корр.): РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампани пуҫланнă йачĕпе районти ĕҫсыннисен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутачĕ **О. Т. Харитонăвă** йулташ тухса пысăк сăмах каларĕ.

Пирĕн районри ĕҫхалăхĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампани пуҫланнине тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕ. Халĕ колхозниксем суйлав кампани пуҫланнине ака ĕҫĕсене ăнăҫлăн туса пынипе ответлеҫҫĕ. Пирĕн РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне кăтартулă иртерессишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕҫлемелле.

Митингра пурте пĕр саслăн ҫакăн пек резолюци йышăнчĕҫ:

Епĕр, район центрĕнчи митинга пуҫтарăннă рабочисем, служăщисем, колхозниксем, вĕренекенсем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампани пуҫланнине хĕрÿлĕн саламлатпăр. Суйлава хатĕрленес ĕҫсене анлăн туса пыратпăр.

Парти Тĕпкомĕ майăн 1-мĕшне иртерме панă лозунг пире ҫапла чĕнет: **„Рабочисемпе хресченсем! Суйлав кампанине сарса пырăр! Пĕрле пулса сойузлă тата автономлă советлă социалисăмлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлама чи лайăх, Ленин—Сталин ĕҫне вĕҫне ҫити парăннă ҫынсене палăртăр!"**

Епĕр хамăрăн тăван коммунисла партийĕн чĕнĕвне пурнăҫа кĕртнипе РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен блокне тытăх та вăйлăн ҫирĕплетнине кăтартатпăр. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене хамăр тăван ҫĕршывăн мухтавлă патриочĕсене, Ленин—Сталин парти ĕҫне вĕҫне ҫити парăннă ҫынсене суйлатпăр. Епĕр революцилĕ сисĕмлĕхе татах та вăйлатса, троцкисла-бухаринла тăнмасен йулашкисене тĕппех пĕтерме, таткала ĕҫсен пулăшкисене хăвăрт пĕтерсе пыма пулатпăр.

Сталин йулташ тырпул тухăҫне ÿстерĕс пырас тĕлĕшпе панă кăтартусене тĕрĕс пурнăҫласа пыратпăр. Сталинла висĕмĕн миллĕкҫулăхри большевикла ҫураки ĕҫĕсене кăтартулăн иртеретпĕр. Верховнăй Советсен суйлавĕсене тата Майăн 1-мĕшне кĕтсе илнĕ май, епĕр ҫураки ĕҫĕсене татах та кăтартулăн туса пыратпăр. Епĕр кăҫалхи ҫул гектартан 125-шер пăт тĕштырă туса илессишĕн вăйлă кĕрешĕве тухрăмăр:

Сывă пултăр коммуниссен партийĕ!

Сывă пултăр халăхсен ҫулпуҫĕ, тĕнчери чи демократилĕ Конституцине туса паракан пирĕн тăван тата йуратнă учитĕл Сталин йулташ!"

Ник. Пушкин.

Суйлав кампанийĕ пуҫланни ҫĕнĕ ҫĕнтерÿсем тума хавхалантарать

ЙЕТĔРНЕ, апрелĕн 26-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Районри колхозсенче, савăтсенче нумай ҫынлă митингсем пулса иртрĕҫ. Йетĕрне хулинчи ĕҫсыннисен митингĕнче 800 ҫын ытла пулчĕ. Польанкăри, Стрелецкинчи тата Кирăв йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен митингĕсенче 400-шер ҫын пулнă.

Ҫу савăчĕпе спирт савăтĕнчи рабочисен пĕрлешÿлĕ 250 ҫынлă митингĕнче ҫакăн пек резолюци йышăннă:

„Епĕр, рабочисем, инженерла-техникла работниксем тата служăщисем, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ пуҫланнине хĕрÿлĕн саламлатпăр.

Суйлав кампани пуҫланни пире производствăра ҫĕнĕ ҫĕнтерÿсем тума хавхалантарать. Епĕр суйлав кунĕ тĕлне — ийунĕн 26-мĕшне ҫурҫулти производствăлă плана 105 процент тултарма пулатпăр. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанине активлăн хутшăнатпăр. Верховнăй Советсене хамăр ҫĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсене, Ленин—Сталин парти ĕҫне чĕререн парăнса ĕҫлекенсене суйлатпăр. Епĕр пурте пĕр шухăшлă пулса, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлама пулатпăр.

Сывă пултăр халăхсен аслă ҫулпуҫĕ Сталин йулташ!"

Ҫав митинграх спирт савăтĕнче 12 ҫул хушши ĕҫлекен работницă Йакимăвă Ксенийа Данилăвнă йулташ тухса сăмах каланă. Вăл савăта пĕчĕк ĕҫе килсе кĕнĕ. Халĕ техноруккăн помощникĕ пулса ĕҫлет. Вăл ҫапла каларĕ:

„Ленинпа Сталинăн аслă партийĕ пире, пирĕн ҫĕршыври ĕҫсыннисене, ĕҫ, вĕренÿ, кану прависем пачĕ. ССР Союзĕнчи хĕрарăмсем арҫынсемпе пĕр тан пур правасемпе те усă кураҫҫĕ. Хĕрарăмсем халĕ социалисăм строителствин пур участкисенче те активлăн хутшăнса ĕҫлеҫҫĕ.

Елĕк чăваш халăхĕ кайа йулнă халăх пулнă. Халĕ пирĕн республика ытти республикăсемпе пĕртан чечекленсе пырать. Чăваш халăхĕ телейлĕ, савăнăҫлă, пуйан пурăнăҫпа пурăнать. Епĕр суйлав кунне производствăра пысăк ҫĕнтерÿ тунипе кĕтсе илме чĕнетĕп".

Ҫавăн пекех Стрелецки колхозĕнчи колхозниксен митингĕ те пысăк ҫĕкленÿпе иртнĕ. Пĕр сасăпа йышăннă резолюцире:

„Троцкисла-бухаринла, буржуалă-национализла бандăсем, фашисăм агĕнчĕсем хăйсен ирсĕр шухăшĕсемпе Совет Союзĕн вăйне хавшатма, пирĕн ҫĕршыва капиталисăм йеркине туса хума ĕмĕтленнĕ. Епĕр вăл тăшмансене пуҫĕпех пĕтерсе хума пулатпăр.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче епĕр тăван ҫĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн сасăлатпăр. Суракине лайăх пахалăхпа тата чи кĕске срукра—6 кун хушшинче туса иртеретпĕр. Суйлав кунĕ тĕлне хамăрăн государствă умĕнчи парăмсене (ăш-какай, сухă, укҫа-тенкĕ пухас тата ытти те) пĕтĕмпех тÿлесе тататпăр".

ПСК(б)П райком ҫекретарĕ **Н. Д. АЛБУТАВ.**

Сăрт-ту ҫинчи „Джаны Йулдуз" колхозра

Тинĕсрен виҫĕ пин метр ҫÿлĕш вырăнта, Тянь-Шань тăвĕсем хупăрласа тăракан таилăмра, чикĕри „Джаны Йулдуз" колхозăн хирĕсем сарăлса выртаҫҫĕ. Апрелĕн 24-мĕшĕнче ирхине ирех мотоциклис ҫак колхоза районта тухакан хаҫат илсе пырса панă. Унта Киргиз СС Республикĕн Тĕпĕҫтăвкомĕ Киргизире суйлав кампани пуҫланасси ҫинчен йышăннă постановленине пичетленĕ. Ҫав вăхăтра колхозниксем хирте пулнă. Ҫакăн хыҫҫăн ҫийĕнчех колхозниксем ĕҫленĕ ҫĕрте митингсем пулса иртнĕ.

Иккĕмĕш бригадăри стахановкă Сали Соловатăвă йулташ хумхануллă сăмах тухса каланă. Инҫетрен курăнакан, йĕркерен ларакан сăрт-тусем ҫине кăтартса, Сали ҫапла каланă:

—Пăхăр та ан манăр, унта Совет чиккин леш йенче ҫуклăх, правасăрлăх, кÿрентерÿ. Унта байсемпе купцасем ĕҫсыннисене вилĕм патне илсе ҫитерне. Пăхăрха хамăрăн аслă тăван ҫĕршыв ҫине, чечекленекен Киргизин уй-хирĕсем ҫине, пирĕн колхоз анисем ҫине, акă ҫак хăма ҫине, унта: киргиз хĕрарăмĕсем арҫынсенчен лайăх сухалаҫҫĕ,—тесе ҫырнă. Кунта пуйан, культурăлă, савăнăҫлă пурнăҫ. Пирĕн халăх влаҫне епĕр хамăрăн чи лайăх ҫынсене ҫеҫ шанма пултаратпăр. Ҫапла тума пирĕн йуратнă атте, пирĕн тăван ҫĕршывăн хĕвелĕ—Сталин йулташ вĕрентет. Ҫулпуҫĕн ҫак кăтартса каланине епĕр нихăҫан та манмăпăр,—тенĕ.

Митинг хыҫҫăн колхозниксем ĕҫе татах та пысăк ҫĕкленÿпе тытăннă. Трактăриссем: Картунăв, Белоконăв, Стаценко, Алексейенко тата ыт. те суйлав кампани пуҫламĕшĕн малтанхи кунне ĕҫ нормине ытлашшипех тултарнипе паллă тунă.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Испанире хĕвелтухăҫри (Арагонири) фронтра икĕ уйăх хушши ĕнтĕ татти-сыпписĕр хайар ҫапăҫусем пыраҫҫĕ. Пăлхавҫăсем ҫак фронтра тăвакан наступленине илсен тата фронтра вăрҫакан ҫарсемпе вăрҫăн техникăла хатĕрĕсен хисепне илсен, вăл—Испанири граждăн вăрҫи пуҫланнăранпа чи пысăк ҫапăҫу шутланать.

Англипе Франци тытса пыракан Испанири „ĕҫсене хутшăнас мар" текен политикăпа усă курса, Италипе Германи интервенчĕсем Арагони фронтне 300 пин салтак, 700 самольот таран, икĕ пин тупă, 200 танка йахăн илсе пырса тултарнă.

Интервентсемпе пăлхавҫăсем, вĕсем ҫарсен хисепĕпе тата вăрҫă техники тĕлĕшпе республиканецсенчен ытларах пулнипе кăна, хĕвелтухăҫри фронтра малала кайма пултарнă. Анчах интервентсем техникă йенчен малта тăни те, республикă хулисем ҫине сывлăшран бомбăсем пăрахса хайарăн тапăнни те, троцкисла шпионсем—Франко генералăн агĕнчĕсем республикă тылĕнче провокацилĕ ĕҫсем туни те—Испани халăхĕн ҫапăҫу кăмалне, унăн пăлхавҫăсемпе интервентсене ҫĕнтерес ирĕкне ҫĕмĕрме пултарайманĕҫ.

Республикă ҫарĕсем, хăйсен территоринчи кашни пĕр шит ҫĕре паттăрăн сыхласа, Каталони чиккисенче—Леридă, Сорт тата Тортосă патĕнче фашиссен наступленине тытса чарнă.

Каталони чиккисем патĕнче ĕҫсем ăнманнине кура, интервентсем вăрҫă ĕҫĕсене Ебро йуханшывран кăнтăр йеннелле куҫарнă. Вĕсем кунта республиканецсен фронтне татса кĕрсе, Винарос патĕнче Вăтаҫĕрти тинĕс ҫыранĕсене тухнă. Ҫапла вăра Каталони республикăлă Испанин ытти пайĕсенчен татăлса йулнă. Анчах вăл республикă правителствине тăруках хăратса пăрахайман. Республикă правителстви хăй ҫĕршывĕн икĕ територин тытăмне тата ăна йертсе пырассине ҫийĕнчех йĕркеленĕ.

Хальхи вăхăтра Испани халăхĕ хăватлă ҫекленÿре. 1936 ҫулта Мадрида паттăрăн хÿтĕленĕ кунсенче каларнă „Но пассаран" „Вĕсем иртеймĕҫ" текен ҫапла лозунг халĕ ĕнтĕ каталонецсен лозунгĕ пулса тăнă. Ҫамрăксем икĕ кун хушшинче доброволецсен икĕ дивизине туса хунă. Строителствă ĕҫĕнче ĕҫлекен рабочисем укрепленисем тăвас ĕҫе хăйсен членĕсене пиншерĕн йанă. Промышленнаҫăн ытти отрăҫлисенчи рабочисем те вĕсен примерĕпех ĕҫлесе пыраҫҫĕ. Фронта тухса кайнă промышленнăҫ рабочисен-доброволецсен вырăнне 150 пин хĕрарăм йышăнмала. Ҫак чĕнĕве вуншар пин хĕрарăм йышăннă. Вĕсене васкасах йатарласа вĕрентеҫҫĕ.

Каталонири вăрҫа хатĕрĕсем тăвакан савăтсем пĕр чарăнмасăр ĕҫлеҫҫĕ, производствăна лайăхлатас тата продукци туса кăларассине ÿстерес тĕлĕшпе пур кирлĕ ĕҫсене те тăваҫҫĕ.

Испани халăхĕн, хăй никама пăхăнса тăмасăр пурăнассишĕн кĕрешекен халăхăн, паттăр оборона тума, фашиссен наступленине тытса чарма вăйĕ ҫителĕклĕ. Испани халăхĕ ҫакна Мадрида паттăрăн хÿтĕленине ĕҫре кăтартса пачĕ. Ăна вăл Каталони чиккисенче те ҫирĕплетĕ.

(ТАСС).

ÿКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: Республикăлă Испанин „Мондес Нуньес" йатлă крейсĕрĕ. (Сойузфото).

Партилĕ-политикăлă ĕçĕн çĕкленĕвĕ

Парти Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕ парти организацисемпе вĕсен руководителĕсем уйрăм коммунистсене партирен кăларас ĕç çине, партирен кăларнисен апелљацийĕсем çине чунсăр, бюрократла пăхни çинчен кăтартса пачĕ. Парти Тĕпкомĕн Пленумĕ кăтартса пани Сĕнтĕрвăрри районĕнчи парторганизацине те пĕтĕмпех тивет. Кунта нимĕн айăпсăр, тӳрĕ ĕçлекен коммунистсенех, елекçĕсем хыççăн кайса, партирен кăлара-кăлара пăрахнă, хăйпĕр коммунистсене вăрçса, йатласа пĕтернĕ. Çапла вара, 1937 çулта мĕн пур коммунистсенчен виçĕ пайĕнчен пĕр пайне партирен кăларнă.

Çав вăхăтрах партилĕ-политикăлă ĕçе йанăхтарса йанă. Парти райкомĕ парти вĕрентĕвне йертсе пыман. 1937 çулхи декабĕр тата 1938 çулхи йанвар уйăхĕсенче 12 кружокра вĕренекен коммунистсенчен 53 проц. çеç занятисене çӳренĕ. Партире тăман активпа та начар ĕçленĕ. Парти Тĕпкомĕн йанварти пленумĕччен партийе илес ĕçне ĕçлемен пирки парти ретĕ те ӳсмен. Райком инструкторĕсем пуçламĕш парторганизацисене партилĕ-политикăлă ĕçе организацилеме сахал пулăшнă. Вĕсем пимрен ытла жалăбăсене тĕрĕслессипе ĕçленĕ.

Ку йанăшсене ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕ кăтартса панă хыççăн тӳрлетме тытăннă. Партирен тĕрĕс мар кăларнă коммунистсене 9 çынна парти ретне кайала илнĕ. Парти ретне кайала илнисене пурне те пекех парти документĕсене панă, вĕсене парти ĕçне хутшăнтарнă. Анчах парти райкомĕ 3 апелљацине пăхса тухман-ха. Ку ĕçсене кĕске вăхăтрах пăхса тухас пулать.

Пуласси икĕ уйăх хушшинче парти райкомĕ партилĕ-политикăлă ĕçе хăпартас тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлеме пуçланă. Ку парторгсемпе, пропагандистсемпе, агитаторсемпе семинарсем, канашлусем ирттерниччен те курăнать. Пуçламĕш парторганизацисенче парти пухăвĕсене вăхăтра; хатĕрленсе ирттерме тытăннă. Парти пухăвĕсем пулас кунне, тата унта тăракан ыйтусене ик-виç кун малтан пĕлтерсе хураççĕ. Партин хуш пухăвĕсене ирттерине пĕрлех, уçă пухусем ирттерме тытăннă. Кун пек пухусене сочувствующисене, коммунистсене, партире тăманнисене те чĕнеççĕ. Çак ĕçсене туса ирттернĕ хыççăн коммунистсен активлăхĕ чылайах ӳснĕ. Парторганизацире критикăпа самокритикă та вăйланнă. Анчах ку ĕçĕн пуçламăшĕ кăна-ха.

Парти Тĕпкомĕ ПСК(б)П ретне членсем илессине çĕнĕрен пуçарса йанăранпа Сĕнтĕрвăрри районĕнче 14 çынна парти ретне илнĕ, 12 кандидата парти членне куçарнă, 19 çынна сочувствующисен ретне илнĕ. Парти ретне стахановецсем, активистсем кĕреççĕ. Акă, вĕсенчен хăшпĕрисем: **И. А. Будникăв** — Судоверфра ĕçлекен рабочи, стахановец — хăйĕн нормине 200 проц. таран тултарса пырать. **М. Н. Волынăвă** — колхозница-стахановкă, Шĕнерпуç колхозĕнче чылай вăхăт хушши бригадир пулса ĕçлет, ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйланă вăхăтра агитатăр пулса ĕçленĕ. Спирт савăтĕнчи активлă комсомолец, агитатăр пулса ĕçлекен **И. Т. Матросăв** йулташа парти ретне илнĕ. **Н. П. Вишневский** рабочийе кандидатран парти членне куçарнă. Халĕ вăл пропагандис пулса ĕçлет.

Парти райкомĕ сочувствующисемпе канашлусем туса ирттерет. Вĕсене парти вĕрентĕвне хутшăнтарнă. 1938 çулта сочувствующисенчен 6 çынна парти ретне илнĕ, халĕ татах 9 çын, партине кĕме хатĕрленеççĕ. Сочувствующисенчен чылайĕшĕ парти ĕçне активлă хутшăнаççĕ. Судоверфра стахановла йухăмла пуçарса йаракан **Плешанăв** сочувствующи хушнă ĕçсене вăхăтра пурнăçласа пырать. Вăл хăйĕн цехĕнче агитатăр пулса ĕçлет. Кашни кунах политинформаци ирттерет, рабочисене илемлĕ литература вуласа парать. Катка-пичке тăвакан савăтри **А. И. Михейĕв** сочувствующи агитаторсен курсĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ. Вăл хаçат-журналсене куллĕн вуласа пырать. Парти историне вĕренет. Хăй мĕн вĕреннине рабочисене каласа ăнлантарать. Кун пек лайăх ĕçлекенсене темĕн чухлех кăтартма пулать.

Парти Чăваш Обкомĕн апрељ уйăхĕнчи Пленумĕ Сĕнтĕрвăрри районĕнчи парторганизаци ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕсене ирттернĕ хыççăн массăлла-ăнлантарулă ĕçе вăйсăрлатнипе, суйлав вăхăтĕнче активлă ĕçленĕ агитаторсене çухатса пĕтернине палăртнă. Суйлав вăхăтĕнче 460 агитатăр ĕçленĕ, феврал уйăхĕ тĕлне 270 агитатăр çеç йулнă. Кружоксем ĕçлеме чарăннă.

Парти райкомĕ халĕ парти Обкомĕн пленумĕ кăтартса панине пурнăçа кĕртме тытăннă. Массăсем хушшинче политикăлă агитацине вăйлатасси çинчен парторгсен тата агитаторсен канашлăвĕсенче сӳтсе йавнă, тата ку ыйтупа йатарласа парти кунĕ ирттернĕ. Агитколлективсене йертсе пыма районри парти активĕнчен 32 çын уйăрнă. Агитколлектив руководителĕсене вĕрентме семинар тунă. Ку семинарсене парти райкомĕнче тата парти кабинечĕсенче ирттереççĕ. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕрентме 126 çынна агитаторсен курсĕнчен вĕрентсе кăларнă. Халĕ районра 721 агитатăр ĕçлет. Халђхи вăхăтра суйлавçăсем кружокĕсенче суйлав Положенисене вĕренеççĕ.

Районри ĕçхалăх массисем тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе питех интересленнине шута илсе, парти райкомĕ тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем çинчен докладсем тума 23 çын уйăрнă. Кунсăр пуçне тата 120 агитатăра семинартан вĕрентсе кăларнă. Семинарта тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене вĕреннĕ. Халĕ ку агитаторсем колхозсенче тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене ăнлантарса параççĕ. Парти кабинечĕ агитаторсене консултацине пулăшса тăрать. Апрелĕн 1-мĕшне районра тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе пĕтĕмпе 60 доклад туса ирттернĕ, т. ыт. те.

Парти райкомĕ партилĕ-политикăлă ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерет пулсан та, ку ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Пысăк çитменлĕхсенчен пĕри — вăл парторганизаци партилĕ-политикăлă ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе çыхăнтарса пыманни. Ку çитменлĕхе пĕтерессишĕн парторганизацин пĕтĕм вăйа хурса ĕçлемеле.

Суйлава лайăх хатĕрленнĕ

ШĂХАСАН. Апрелĕн 21-мĕшĕнче МТС çумĕнчи парти пуçламĕш организацин отчотпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Коммунистсем пуху хăш числара пулассине 10 кун малтан пĕлнĕ, çавăнпа вĕсем пухăва пурте лайăх хатĕрленсе пынă. Парторг Толмачов йулташ отчотра критикăпа самокритикăна тивĕçлĕ вырăн пачĕ. Отчот тăрăх коммунистсем пурте тухса калаçрĕç.

Политвĕренӳве чылай коммунистсене йавăçтарнă. 11 коммунистран 3-шĕ ленинисăм, 3-шĕ парти истори кружокĕнче, 5-шĕ политграмата кружокĕнче вĕренеççĕ.

Парти членĕ Мухин, кандидат Денисăв политикăна йапăх вĕренсе пыраççĕ. Мухин йул. 3 темăпа зачот паман. Занятисене йĕркеллĕ çӳремест," пырсан та хатĕрленмесĕр пырать. Денисăв йул. парти историне вĕренмеле пулнă. Анчах вăл унта çӳремен. Политграматăна вĕренмели кружока та йĕркеллĕ çӳремест. Вăл 1932 çултанпа кандидатра тăрать, члена кĕме хатĕрленмест. Романăв, Чикмайков коммунистсен те политзанятисене пыманнисем, йе начар хатĕрленсе пынисем пулнă. Парторг коммунистсем мĕнле вĕреннине тĕрĕслесе, йулса пыракансене занятисене йĕркеллĕ çӳреттерессипе, хатĕрленме пулăшассипе çителĕклĕ ĕçлемен. Пухусенче те уйрăм коммунистсем мĕнле вĕренсе пыни çинчен сӳтсе-йавман.

Пухусенче йышăннă решенисем çителĕклĕ пурнăçланса пымаççĕ. Вăл решенисем мĕнле пурнăçланса пынине начар тĕрĕслесе пынă. Çавăнпа уйрăм коммунистсем хăйсене панă ĕçсене çителĕклĕ пурнăçласа пыман.

Парти ретне илесси хăй тĕллĕн пулса пырать. Ку тăранччен пурĕ те 2 çынна партине илнĕ.

Парторганизаци хăйĕн ĕçне производствă ĕççипе çыхăнтарса пынă. Коммунистсем бригадăсенче социалисăмла ăмăртăва пуçарса пыракансем пулса тăраççĕ. Халĕ бригадăсем пурте тата 73 тракторис ăмăртаççĕ.

Иртнĕ çулта МТС пĕтĕмпе производствăлă плана 117 проц. тултарнă, трактăрсене февралĕн 2-мĕшĕнче республикăра чи малтан йусаса пĕтернĕ.

Çапла пулсан та, производствăра çитменлĕхсем сахал мар. Вĕсене коммунисем аван кăтартса пачĕç.

Трактăрсене участкăсене илсе тухсан, икĕ трактăра начар йусанă палăрнă.

Отчотпа суйлав пухăвĕ çĕнĕ парторга пухура палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме хушса хăварчĕ.

С. Соколов.

Комсомол йышĕ ӳсет

Йелчĕк. Районра комсомол Тĕпкомĕн 5-мĕш пленумĕн решенийĕсене сӳтсе-йавнă хыççăн, колхоз çамрăкĕсем хушшинче комсомола кĕрекенсем йышлана пуçларĕç. Комсомол Тĕпкомĕн пленумĕ пулнăранпа районĕре 117 çамрăка комсомол ретне илнĕ.

Ново-Чурино йалĕнчи комсомол пуçламĕш организацийĕ йалти çамрăксемпе хĕрсен пухуне пуханă, унта комсомол Тĕпкомĕн 5-мĕш пленумĕн решенине сӳтсе йавнă. Çавăн хыççăн, 15 çамрăк комсомола кĕме ыйту панă. Çамрăксемпе ĕçлессине уйрăмах комсорг Грибавпа Красиљникăв коммунис тăрăшса ĕçлессĕ. Красиљникăв йулташ час-часах çамрăксене тĕнчери лару-тăрусем çинчен ăнлантарса парать.

Тайапа-Ентринчи комсомол пуçламĕш организацийĕн комсорг Матвеев йулташ пуçарнипе çамрăксем хушшинче комсомол уставĕпе программине вĕренмелли кружок организациленĕ, халĕ унта 8 çамрăк комсомол ретне илнĕ.

Сиреклĕ-Шахалĕнчи тулли мар вăтам шкул çумĕнчи комсомол организацийĕ 9 пионера комсомол ретне илнĕ.

Г. Иванов.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Крымри йалхуçалăх институчĕн студентикисем. Сулахайран: О. Суханăвă, М. Антоненко, М. Сиедина, Л. Снегирĕвă. Вĕсем институтра вĕреннипе пĕрлех автомобил ĕçне лайăх вĕренсе пĕтернĕ.

Левинштейн фото-укерчĕкĕнчен (Союзфото).

Тĕлĕнтерекен хаçат

Илйинкăри тулли мар вăтам шкулта ĕçлекен учителсем „Ĕç йалавĕ" хаçата — ПСК(б)П Тутаркас райкомĕпе райĕçтăвкомĕн виçĕ кунра туса тăракан хаçачĕн 36-мĕш номĕрне вуласа тухсан: „тĕлĕнтерекен хаçат" терĕç.

Мĕн пирки тĕлĕнтерчĕ-ха вĕсене çак хаçат? Акă мĕн пирки. „Ĕç йалавĕ" хăйĕн „И." çырнă **„Агитатăр — учителсем парти историне вĕренеççĕ"** йатлă статйинчи фактсене пĕтĕмпех шухăшласа кăларнă.

1. „Кружокăн занятисене 10 учител **„йĕркелĕ çӳреççĕ"** тенĕ. Тĕрĕс мар. Кружокра 12 çын тăрать. Вĕсенчен 11 учител. Анчах пурте „йĕркелĕ çӳреççĕ" теме çук. Пĕтĕмпе 12 занятие пулнă. Учителсенчен П. В. Попов 3 занятире пулман, П. Т. Йерусланăв 8 занятире пулман.

2. „Учителсем лайăх хатĕрленеççĕ" тени те тĕрĕс мар. Кружок членĕсем занятисене хатĕрленсе пыман пирки кружок руководителĕ 5 занятире хăй калана (шкул чĕлхине, каласан, лекци вуланă).

3. „Кружока Йерусланăв йертсе пырать" тенĕ. Чăнах та çитĕ тĕлĕнмелипех тĕлĕнмеле: 8 занятире пулман Йерусланăв мĕнле майпа кружока йертсе пырать-ши? Кружок 1937 çулхи октаберĕн 10-мĕшĕнче ĕçлеме тытăннă. Йерусланăв кăçалхи йанварĕн 28-мĕшĕнче пĕрре пулнă (ку вăхăтчен унсăр пуçне 4 занятие иртрĕ), тата тепĕр 4 занятинче пулман хыççăн, апрелĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа тăтăшах çӳреме тытăннă. Çакна „И" корреспондент ĕнентерессĕн, „Ĕç йалавĕ" редакторĕ, Н. Г. Потапăв йулташ, çак тĕрĕсмарлăха темшĕн шанчăклăнах ĕненнĕ.

Кружока парти членĕ И. Г. Леспова йертсе пырать. Вăл калана тăрăх, çулте асăннă статйа çĕртте тĕрĕс мар.

„Ĕç йалавĕ" хаçат редакцийĕ фактсене тĕрĕс мар çутатнипе политикăла пысăк йăнăш тăвать.

В. Долгов.

Агротехникăла консултаци

Сат-пахчинчи çуркуннехи ĕçсем

Пирĕн республикре вăтамран илсен гектартан 40—50 центнĕр таран сат çимĕçĕ туса илеççĕ. Çитменнине тата пирĕн сатсем кашни çулта мар, икĕ çулта пĕр хут, йе виçĕ çулта пĕр хут çеç çимĕç пани те пур.

Сатсем икĕ çулта пĕр хут йе ытларах çул иртсен анчах çимĕç параççĕ текен тăшманла „теорийе" тахçанах сат-пахчи стахановецĕсен ĕçĕ сирсе пăрахнă. Йетĕрне районĕнчи „Çĕнĕ çул", Улатăр районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан, Куславкка районĕнчи „Бољшевик", Шăхасан районĕнчи Кирăв йачĕпе тăракан тата ытти колхозсем те нумай вăхăт хушши улмуççи сачĕсенче кашни çулах тата республикăри вăтам хисепрен пысăк тухăç илсе пыраççĕ. „Çĕнĕ çул" колхоза 4 çул хушши çитĕ кашни çулах гектартан 200 центнĕр çимĕç туса илеççĕ, урăхла каласан, республикăри вăтам хисепрен 4—5 хут ытларах илеççĕ.

Çак тĕслĕх хамăрăн социалисăмла сат-пахчисенчен 4—5 хут, йе ытларах пулми туса илме май пуррине уççăн çирĕплетсе парать. Çапла вара, сатсене лайăх пăхса тăрсан тата тивĕçлĕ сыхласа усрасан кирлĕ чухлĕ çимĕç илме пултаратпăр.

1938 çул, сталинла виççĕмĕш пилĕкçуллăхăн пĕрремĕш çулĕ, сат ĕрчетес ĕçре чаннипех пысăк улшăну тунă çул пулса тăма тивĕç. Сатсенчи сурхи ĕçсем пысăк тухăçлă çимĕç туса илес тата хăйпĕр çулсенче анчах çимĕç туса илессине пĕтерме май паракан тапхăр пулса тăрать.

Кашни çулах сатран пысăк тухăç илес тесен сатра мĕнле ĕçлемелле-ха?

Улмуççи хăйпĕр çулсенче анчах çимĕç пани чи малтанах çуллахи çĕре кăпкалатса тăманнинчен, агротехникăла ĕçсене вăхăтра туса пыманнинчен килет. Хĕллехи сивĕсем, улмуççи чечеке ларнă вăхăтра сивĕ пулнисем çимĕç пуласине чакараççĕ йе пуçĕпех пĕтерме пултараççĕ. Çак çитменлĕхсене пĕтерсен кашни çулах пысăк тухăçлă çимĕç туса илме пулать.

Улмуççисене лайăх ӳсе пыма кирлĕ условисем туса памала, ăна шăпасшипĕн, тĕрлĕ чирсенчен тата хурт-кăпшанкăсенчен сыхламала. Çавна май çак суркуннерех пуçласа пур сат-пахчисенче те (вырăн килĕшӳлĕ пулсан) хура çĕртме сухи тума кирлĕ. Малтанхи хут сухалас умĕн ку вырăна тислĕк (гектар çине 50—60 тонна), торф, йушкăн тăпри, минераллă имçамсем тата ытти çĕре çемçетекен йапаласене те (кĕркунне такмаль пулсан) такмала. Тăвайкилĕ вырăнсенче тăпрана шыв йухтарса кайас хăрушлăх пур пулсан, тăпрана йухтарса каймала мар туса урлă сухаламала. Çавна тунă чухне те çĕре удобрени хывма кирлĕ. Ун хыççăн сӳремелле, йăвăçсен таврара кинĕ улăм, торф йе ытти çĕрсене хурса мулчировани тумала. Улмуççисем тавралăхĕнче сумкăракĕсем ан пулччăр, тăпра кайна тăтăр тесе, су касăнчи улмуççи кутĕнчи çĕре 5—6 хутран кайа мар кăпкалатса тăмала.

Йăвăçсем çĕнĕ туратсем кăларса ӳсме тытăниччен типĕ туратсене, сийенлесе, начаррисене касса илмеле, йăвăç тупине ик вĕç шывĕпе шуратмала. Пашкасем тухма тытăниччен йăвăçсене йĕшĕл ĕçлесе шывпа йĕпе (5—8 процентлă туса) сирпĕтмелле. Улмуççисем çимĕç паракан найĕсене суркуннехи сивĕрен пĕтĕмпех сыхлас хăрушлăх пур.

Улмуççисем чечеке ларнă вăхăтра тăм тивесрен тĕрлĕ майсемпе кĕрешме пулать. Ку тĕллевпе тĕтĕм мăкăрлантарни ит усăллă. Пахчара тĕрлĕ çӳп-çап, улăм çулсене тăрса тĕтĕм кăлармала.

Кунсăр пуçне пахчаран пĕтĕм çӳп-çапсене тасатса кăларса, сатра кăтартулă йĕрке тумала. Сат-пахчине таса пулсан тĕрлĕ сийенлĕ хурт-кăпшанкăсем те сийен тăвакан сумкăракĕсем те ĕрчейменĕççĕ. Çавăн пекех улмуççи кашни çулах çимĕç патăр тесен, улмуççин вĕтĕ турачĕсене пĕлсе касни те усăллă. Улма ӳсме пултарайман вĕтĕ туратсене касса пăрахмала. Анчах çак ĕçе уйрăм улмуççи сурчĕсене шута илни тăрăх, сат-пахчи ĕçĕн специалисĕ йертсе пынипе тумала.

Осанăв.

Ĕлĕкхи май уйавĕсем

Совет халăхĕ пысăк савăнăçпа Майăн 1-мĕшĕнче урама тухать. Май уйавĕ унăн кĕрешӳпе çĕнтерӳ уйавĕ, ĕçпе савăнăç уйавĕ, цуйан та културăлă пурнăç уйавĕ пулса тăрать.

Анчах пайанхи телейлĕ пурнăçшăн, пайанхи савăнăçлă уйавшăн рабочи класăн сахал мар йун йухтарса, вăй тăкмала пулнă. Рабочин сăмах чĕнме йураман. Халăх правишĕн калăнă кашни сăмахах пăлхав тесе шутланă. Кашни сăмахшăн тĕрмене персе чикме йе каторгăна йамалла пултарнă. Çĕнĕ пурнăç тума вăраннă рабочи клас çулран çул вăй пухнă, пуçмăр тĕнчине çĕмĕрсе тăкма хатĕрленнĕ. Революцилĕ май уйавĕ çав аслă ĕçе туса пыма пулăшнă.

Российăра малтанхи май уйавĕ 1890 çулта Варшавăра[1] пулса иртнĕ. Рабочисем çав кун забастовкă тунă. Забастовкăна 10 пин çынна йахăн хутшăннă. Вĕсен хушшинчен 20 çынна полици тытса арĕсленĕ.

1891 çулти май уйавĕнче Петербургри рабочисем вăрттăн пуху туса ирттернĕ. Пухура 200 çынна йахăн пулнă. Виçĕ рабочи — Н. Богданăв, Вл. Прошин тата Ф. Афанасйĕв — самодержавине хирĕç кĕрешме чĕнсе сăмах каланă. Прошин сăмахĕ уйрăмах хĕрӳлĕн йалкăшнă:

„Пирĕн çĕршывра, ĕçĕр пĕлетĕр ĕнтĕ, халăх прави çинчен калани пурне те пăлхав тесе шутлаççĕ! Кăшкăрса тăкнисĕр, штыксăр, тупăсăр, розкăсăр, Çĕпĕрсĕр, тĕрмесĕр, каторгăсăр тата казак саламачĕсемсĕр пуçне урăх нимĕн те çук!.. Епĕр, чурасем! Кашни становой, кашни околотачнăй, кашни городовой умĕнче çĕлĕке хывса тăмала!.. Пуçлар-ха епĕр хамăршăн кĕрешме! Малтан пире çăмăл пулас çук: кашни утăмшăн, кашни ĕçшĕн тĕрмене йе ссылкăна лекме пулать. Анчах мĕн тăвас-ха ĕнтĕ, йулташсем! Шухăшласа пăхмала, вĕт пайанхи хамăрăн пурнăç çинчен. Експлоататорсемпе правителсем пире асап кăтартса пурнăçе... Пирĕн йупа вĕсем çĕлĕк пĕк ĕмеççĕ. Пире вĕсем темле шурăхса, кăвакарса кайнă çынсем, типсе хăрана çынсем тăваççĕ. Мĕн тума? Фабрикантсене, помещиксене, чиновниксене тата патшана иртĕхсе ĕçсе-çисе, аскăнланса пурăнма!.. Хамăр тивĕçлĕхшĕн усă пурмали правасене хамăра вађђи кĕрешсе илер!.. Çăнлăхшăн кĕрешĕпĕр, йулташсем, вилĕм патне çитиччен пĕр утăм та чакмăпăр, çăнлăхшăн, пĕртанлăхшăн, тăванлăхшăх, ирĕклĕхшĕн кĕрешĕпĕр! Кĕрешме вĕренĕпĕр, йулташсем, вăйлă партипе организациленĕпĕр!"[2]

Çав çулах Жирадовра[3] полици рабочисен демонстрацине çĕмĕрсе тăкнă. Полицейскисем хăшпĕр рабочисене амантса пĕтернĕ, темиçе çĕр çынна тытса арĕсленĕ. Арĕсленисене касаксен стройĕ витĕр кăларнă, вĕлерĕç патне çитиех саламатпа хĕненĕ. Нумайĕшне тĕрмене хупса лартнă йе ссылкăна йанă.

1892 çулта Петербургра, Тулăра, Варшавăра, Лодзире, Вилнăра уйавланă. Полици тем пекех хытă хĕснĕ пулин те, рабочисем ĕç пăрахса урама тухнă. Лодзире йунлă çапăçу пулса иртнĕ: полици 36 çынна персе вĕлернĕ, 348 çынна тытса хупнă. Петербургра 162 çынна тытса хупнă.

Рабочи класа хăйĕн революцилĕ уйавне уйавлама нимĕнле вăй та чарса тăма пултарайман. Йалтах урăхла: май уйавне уйавласси çултан çулах сарăлса пынă. 1895 çулта Петербургра В. И. Ленин „Рабочи класа ирĕке кăларассишĕн кĕрешмели союз" организациленĕ. Тепĕр çулне çав Союз Майăн 1-мĕш йачĕпе 3 пин екземпљар прокламаци пичетлесе кăларнă. Виçĕ пин ун чухнехи вăхăтшăн пысăк тираж пулнă. Асăннă прокламацире çапла çырнă:

„...Капиталиссемпе правителствă, пуçсемпе пĕрле пĕр йалав айне тăма, „Пĕтĕм тĕнчери рабочисем, пĕрлешĕр!" тесе çырнă йалав айне тăма вăхăт ĕнтĕ..."[4]

1898 ç. мартра Минск хулинче Российăри социал-демократилĕ рабочи партийĕн 1-мĕш сйесĕ пулса иртнĕ. Сйес йачĕпе кăларнă манифес рабочисене политикăлă ирĕклĕхшĕн, 8 сехетлĕ ĕç кунĕшĕн кĕрешме чĕннĕ. Çав çулти уйавра Петербургри рабочисем чылай хапрăксавăтсенче стачкăсем тунă. Полици 400 çынна тытса арĕсленĕ. Петербургри рабочисемсĕр пуçне май уйавне Хусанти, Кийĕври, Тифлисри, Полтавăри, Йекатеринославђри, Костромари, Одессăри, Либавăри, Ригăри, Вилђнăри, Белостокри тата ытти çĕрти рабочисем хутшăннă.

Тифлисри чукун çул мастерскойĕсенче пысăк забастовкă пулса иртнĕ. Ăна Сталин йулташ йертсе пынă социал-демократсен ушкăнĕ организациленĕ.

Рабочисен революцилĕ йухăмĕ ӳссе пынине кура, патша правителствиви 1900 çулта майăн 1-мĕшчен йумай малтан „хатĕр тăмала" текен приказ панă. Анчах патша правителстви пăркăчласа хытарни мĕн кирлине пама пултарайман. Рабочисем чылай хуласенче май уйавне уйавланă. Харькăвра уйрăмах вăйлă демонстраци пулнă — пĕтĕмпе 10 пин çынна йахăн хутшăннă.

Социал-демократири оппортунисла йухăмăн йумахне вырăс рабочисем, политикăлă кĕрешӳ патне ӳссе çитеймен-ха, вĕсен тĕп ĕçĕ Российăри политикăлă стройа хирĕç кĕрешесси мар, економикăлă кĕрешӳ пулать текен йумаха — Харькăври забастовкă пуçхĕрлĕ ӳлĕнтернĕ.

1901 çулти май уйавне тата та вăйлăрах уйавланă. Майăн 1-мĕшĕнче Выбăрг йенчи (Петербург) хапрăкĕсем пурте забастовкă тунă. Майăн 4-мĕшĕнче хăшпĕр хапрăксенчи рабочисем демонстраци тăвас майпа хулана кайнă. Çампсонийĕв кĕперри патĕнче вĕсен çулне утлă полицийе çуран полици пӳлсе лартнă. Хĕçпăшалсăр рабочисем чулпа та çĕçĕпе çапăçнă. Çапăçу темиçе сехет хушши пынă. Ик йенчен те 70 çынна йахăн аманнă, вилнисем те пулнă. Полици темиçе çĕр çынна тытса арĕсленĕ.

Майăн 1-мĕшĕнче Обухăв савăтĕнче пит те пысăк ĕç пулса иртнĕ. 1.500 рабочи ĕçе тухман. Çавна хирĕç администраци 26 рабочине ĕçрен кăларса йанă. Рабочисен коллективĕ вара çакăн пек çирĕп требăвăни лартнă: ĕçрен кăларса йанă рабочисене кайала илмеле, 8 сехетлĕ ĕç кунĕ туса памала, ĕçукçи ӳстерсе памала, май уйавне уйавлама ирĕк памала, тенĕ. Администраци рабочисен требăванисене йышăнман. Çавна хирĕç рабочисем демонстраци организациленĕ, вĕсен çумне ытти савăтсĕнчи рабочисем пĕрлешнĕ. Темиçе пин рабочи Шлиссельбург çулĕ çине кайма тухнă. Анчах çул çинче вĕсене хирĕç полицейскисемпе жандармсем тухса тăнă. Вĕсем рабочисене киле саланма хушнă. Рабочисем чулпа пеме пуçланă. Çапăçу пуçланса кайнă. Чылай çапăçнă хыççăн, полици кайала чакнă, рабочисене пăшалпа пеме тытăннă. Рабочисем вара чулсенчен, хӳмесенчен баррикада туса лартнă та, 9 сехет хушши тытăнса тăнă. Çар персе çитсен тин рабочисене парăнтарнă. Пĕтĕмпе вара 800 çынна йахăн тытса арĕсленĕ.

„Новое побоище" йатлă статйара Ленин çапла çырнă:

„Пултăшсем! Майăн 1-мĕшĕнче вĕлернисен тата амантнисен йачĕсене пурне те пухма тăрăшăр. Антив, столицăри рабочисем вĕсен йачĕсене асăнса пурăнччăр, халăх ирĕклĕхĕшĕн полици правителствине хирĕç çĕнĕрен татăклăн кĕрешме хатĕрленччĕр!"[5]

1900—1901 çулсенче Тифлисре забастовкăсем пулса иртнĕ. Вĕсене Сталин йулташ йертсе пынă социал-демократилĕ ушкăн организацилесе ирттернĕ. 1901 ç. майăн 1-мĕшĕнче Тифлис хĕçпăшаллă лагĕр пулса тăнă. Полицейскисене, çар чăсĕсене çапăçма хатĕрлесе тăратнă. Анакăна пăхса тăмасăр, 3 пин çын хула варне демонстраци тума пухăннă. Рабочисем Маркспа Енгелсăн портречĕсене йатса пынă. „Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!" тесе çырнă хĕрлĕ йалав вĕлкĕшсе тăнă. Казаксемпе полицейскисем демонстрацире пулнисенчен 24 çынна амантнă, 40 çынна тытса арĕсленĕ.

1902 ç. май уйавĕнче Российăри пысăк хуласенче пуринче те тенĕ пек демонстрацисем пулса иртнĕ. Сормăвăра уйрăмах вăйлă демонстраци пулнă — 5 пине йахăн çын хутшăннă. Ăна рабочи-искрăвецсем организацилесе йертсе пынă. Вăл „Тĕп пултăр патша!", „Сывă пултăр политикăлă ирĕклĕх!" текен лозунгсемпе иртнĕ. Демонстрацине патша çарĕсем салатса йанă. Тытса арĕсленĕ çынсене суда панă, вĕсенчен ултăшне ĕмĕрлĕхе каторгăна йамала тунă. 1903 çулта РСДР Партийĕн II-мĕш сйесĕ пухăннă. Çав сйес бољшевикла партине организацилес ĕçре шутсăр пысăк вырăн йышăнса тăнă. „Бољшевисăм, политикăлă шухăш йухăмĕ пулса тата политикăлă парти пулса, 1903 çултанпа пурнат"[6].

Рабочи клас революцилĕ кĕрешĕве хăйĕн вăйне пухса пынипе пĕрлех хăй тавра хăйĕн союзникĕсене — хресченсене пĕтĕçтерсе пынă. 1904 ç. май уйавне Грузири хăшпĕр хресченсем хутшăннă. Хачестăви йалĕнче таврари хресченсен йышлă демонстрацийĕ пулса иртнĕ. Митинг хыççăн хресченсем хĕрлĕ йалавсем йатса, революцилĕ йурăсем йурласа, Чахатури йалне тухса кайнă. Унта ытти районсенчи хресченсем пухăннă пулнă. Çул çинче демонстрантсене тытса чарса, стражниксем икĕ çынна персе пăрахнă.

1905 ç. майăн 1-мĕшĕ революци тăвăл пек вăйлăн çĕкленсе пынă тапхăрта пулса иртнĕ. Йанварĕн 9-мĕшĕнче Петербургра рабочисен мирлĕ демонстрацине патша хушнă тăрăх йун айне тунă. Российăри рабочи клас çавна хирĕç массăлă стачкăсем туса ответленĕ. Йанварĕн вăтаçĕрĕнче 500 пине йахăн рабочи забастовкă тунă. Революцилĕ шухăш-кăмăл çарсем хушшине, хресченсем хушшине сăрхăнса кĕнĕ. Бољшевиксен партийĕ Ленинпа Сталин йертсе пынипе массăсене татăклă çапăçăва хатĕрлесе пынă, меншевиксене хирĕç татăклăн кĕрешнĕ.

1905 ç. май уйавне Российăра 187 хулара уйавланă. Вăл пур çĕрте те „Тĕп пултăр самодержави" тенĕ лозунгпа иртнĕ. Чылай çĕрте май уйавне хресченсем хутшăннă. 1906—1907 çулсенче май уйавĕсем тата та хăватлăрах иртнĕ. Сăмахран, 1906 ç. Петербургра 500 предприйати — 100 пин рабочи забастовкă тунă.

1905—1907 ç.ç. революцине пусарса лартнă хыççăн, тискер реакци пуçланса кайнă. Бољшевиксен партийĕн çав вăхăтра вăрттăн ĕçлемеле пулнă. Анчах парти рабочисемпе таччăн çыхăнма пăрахман. Вăл меншевиксен — Плехановăн, Мартăвăн, Троцкин тата Кº — тăшманла ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса пынă. Вăл рабочи класа çĕнĕ çапăçăва, самодержавине штурмăлама хатĕрлесе пынă.

Тискер реакци тапхăрĕнче те, ун хыççăн та, империалисăм вăрçи вăхăтĕнче те май уйавне уйавламасăр пĕр çул та иртмен. 1908 ç. майăн пĕрремĕш забастовкине 100 пине йахăн, 1911 çулта 100 пин ытларах рабочи хутшăннă. 1912 ç. пĕр Петербургра кăна 250 пин, пĕтĕм Российĕпе çур мĕлйуна йахăн рабочи забастовкă тунă. 1913 çулта та забастовкă тăвакансен хисепĕ çур мĕлйун патнеле çывхарнă. 1916 ç. Мускавра ахаљ предприйатисенче çеç мар, çар савăчĕсенче те забастовкă пулнă.

1917 çулта, патшана сирпĕтсе антарнă хыççăн, Российăри рабочи клас май уйавне пуçласа ирĕклĕн уйавланă. Тепĕр çулне вăл, пуçпулса тăракан клас пулса, уйавланă.

Халĕ ĕнтĕ совет халăхĕ, тĕпрен илсен хăйĕн çĕршывĕнче социалисăм туса хунă халăх, май уйавне ирĕклĕн çеç те мар, чунтан-вартан савăнса уйавлать. ССР Союзĕнчи ĕççынисен Майăн 1-мĕшĕнчи хăватлă демонстрацийĕсем социалисăмла тăван çĕршывăн никам çĕнтерейми вăйне кăтартса тăраççĕ.

[1] Варшавă — халђхи Польшă столици.

[2] 1 мая — историческая справка. Государственное издательство политической литературы, Москва — 1938 г., стр. 13.

[3] Жирадов халĕ Польшă территорийĕ кĕрет.

[4] Ленин. Приложения к т. I сочинений, стр. 451.

[5] Ленин, т. IV, стр. 118.

[6] Ленин. Детская болезнь „левизны" в коммунизме. Соч., т. XXV, стр. 174.

1938 çулхи çураки

Вылйăхсене кĕрхи калчасем çинче çӳретмеле мар

Чылай районсенче кĕрхи калчасем çинче вылйăхсем çӳретнине палăртнă. Вылйăхсене кĕрхи калчасем çинче çӳретни—тырпул тухăçлăхне чакарать, йе калчасене пĕтĕмпех пĕтерет. Çакăн пирки Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ—Коротков йулташ приказ каларнă. Çав приказ тăрăх, райçĕрĕç пайĕсен пуçлăхĕсене, МТС директăрĕсене, райçĕрĕç пайĕсен тата МТС аслă агрономĕсене кĕрхи калчасем çинче вылйăхсене çӳретессине халех чарса лартмалли ĕçсем тума хушнă. Çавăн пекех йалсоветсене, колхоз правленисене униче картисене йусама, кĕрхи тырă калчисене хурал тăрас йĕркене тума, калча çинче вылйăх çӳретнĕшĕн айăплисене судпа ответ тыттарма хушнă.

286 гектар çуртыррисем акнă

ЙЕТĔРНЕ, (телефонпа). Районри 45 колхоз клевĕр акма панă плансене тултарнă. Анчах, хăшпĕр колхозсем клевĕр вăрлăхне хĕл вăхăтĕнче кирлĕ чухлĕ хатĕрлемен пирки, ку ĕç кайа йулса пырать. Акă, Ирçери „Сура" колхозăн планпа 40 гектар акса хăвармала. Клевĕр вăрри çителĕклĕ хатĕрлемен пирки 6 гектар çеç акнă. Çав нашкалах тата Кăкшăмри, Палтайри колхозсен клевĕр вăрлăхĕ çителĕксĕр. Çав хушăрах вăл колхозсемпе йунашар колхозсенче клевĕр вăрлăхĕ ытлашшипех пур. Колхоз председателĕсем клевĕр вăрри тупас тесе тăрăшмаççĕ.

Районри чылай колхозсем çурхи ака тума тухрĕç. Апрелĕн 24-мĕшне пурĕ районĕпе 792 гектар сухаланă. Никольскинчи Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз 57 гектар викă утăлăх, „Партин 17-мĕш съезĕ" колхоз та 36 гектар викă вăрлăхлăх акса хăварнă.

Улăх Шăматри „Колхозник йулташĕ" колхоз 7 гектар сĕлĕ, 6 гектар йасмăк акнă. „Трактăр" колхоз 17 гектар урпа акса хăварнă. Районĕпе апрелĕн 24-мĕш тĕлне 286 гектар çинче çуртыррисем акнă.

1215 гектар кĕр калчисене, иртнĕ çулта акнă клевере 310 гектар сӳреленĕ.

Н. Цветков.

Колхозри савăнăçлă ĕç

Пĕр ирхине вăрман хыçĕнчен хĕвел курăнсанах, тăватă колхозник колхоз правленине васкаса çитрĕç.

— Малтантарах çитрĕмĕр пулĕ-ха, тепĕр чухне, çăварне чĕлĕм хыпнă мучи.

— Вăхăт та ĕнтĕ — хуташăнчĕ тепри хăйĕн чĕлĕмне махоркă тултарса.

— Есĕр те çитрĕр-и? — тухрĕ вĕсене хирĕç колхоз правленин председателĕ С. Ф. Кабуркин йулташ.

— Çитрĕмĕр, — ответлерĕç мастăрсем, чăн мастăрсем, тырă акакан мастăрсем.

Илйинкăри С. М. Кирăв йачĕпе тăракан колхозра (Тутаркас р.) тырă акакансем пули-пулми çынна хушмаççĕ.

Кунта мĕн колхоз пуçланнăранпах тыра лайăх пĕлсе акакан колхозниксем акаççĕ. Вĕсем çак ĕçĕн тивĕçлĕ мастăрĕсем И. Д. Кабуркин, Е. М. Пичушкин, И. М. Софронăв, В. А. Архипăв йулташсем, вĕсем хăйсене панă нормăпа йалан лайăх пахалăхна тултарса пыраççĕ. Кăçал та вĕсепех тырă акма уйăрнă. Кăçалхи суракинче вĕсен 50 гектар тĕштырă, 12 гектар çине клевĕр, пĕтĕмпех суртлă вăрлăх акса хăвармала. Вăрлăхне тахçанах суртласа хатĕрленĕ ĕнтĕ.

Акакансем чĕлĕмсене тивертсе кăвак тĕтĕм йăсăрлантарма тытăнсан, çав хушăрах сухаçсем те правленине çитрĕç. Сухаççене те ахалех уйăрман, вĕсене суха тума лайăх пĕлнĕрен уйăрнă.

— Пĕр шăйраксăр сухаламала, пĕр алхушнисĕр акмала, çакă ĕнтĕ вĕсен задачи.

Кăçал вĕсем 18 центнĕртан кайа мар тĕштырă туса илессишĕн, государствăна чи лайăх тырă парассишĕн, тулăх та культурăлă пурнăçшăн кĕрешеççĕ ĕнтĕ.

...Хĕвел хĕрелсе тухсанах колхоз правленине кам килмелисем пурте пухăнчĕç. Пĕри кайарах йулнă та теприсем унтан çăмăллăн, йулташла йăвашшăн кулса та илчĕç.

Урупа час сыраймарăн-и мĕн?

Урапа сырсан та, пĕр мăшăр çăпата кăйтри йавнă, пĕлесех тетĕр пулсан...—тупрĕ сăмахне кайарах йулни те.

Тухар йултащсем, — илтĕнчĕ председатель сасси. Акакансем чĕлĕмсене кĕсйисене чиксе хыпаланса урамала тухрĕç. Унчен те пулмарĕ сухаçсем, плугсем кӳлсе, вăрлăх турттаракан михсем ăшне тултарнă вăрлăха тиесе тухрĕç. Ун хыççăн тырă акакансем хаваслăн утрĕç.

Сăкăр пек писсе çитнĕ çĕр çине вăхăтра тырă акакан колхозниксем çăкăр та кулач та çиĕç, хĕпĕртесе çĕнĕрен те çĕнĕ йурăсем йурлĕç.

„Тавтапуç, мухтавлă, Сталин,
Аслă чыс аттемĕре!
Сан çинчен йурланă йурă,
Кайтăр ĕмĕр-ĕмĕре."

Трактăр бригадисем ĕçе тытăнчĕç

ЙĔПРЕÇ, (телефонпа). Апрелĕн 24-мĕш тĕлне районри 22 колхоз акана тухнă. МТС трактăр бригадисем те ĕçе тытăнчĕç. Чурачăк, Хыр-хĕрри, Хурамал т. ыт. колхозсенче трактăрсем хĕрсех сухалаççĕ.

„Заря" колхоз çуракине лайăх хатĕрленсе тухрĕ. Ку колхозăн бригадисенче ăмăртăва тивĕçлипе сарса пыраççĕ. Пур бригадăсем те тĕштырăсене 6 кун хушшинче пысăк пахалăхпа акса хăварассишĕн кĕрешеççĕ.

Рабочи класăн культурăла-техникăлă виçине инженерлă техникăлă ĕçри работниксен виçи таран хăпартар!

(ПСК(б)П Тĕп комĕ 1938 çулхи Майăн 1-мĕшне иртерме панă лозунгсенчен)

Плана тултарса кĕтсе илер

Чăвашкоопромсоюз системине кĕрекен промысла ертелĕсене çĕклекенсем уйава хатĕрленнĕ май апрель уйăх планне ытлашшипех тултарма, продукци пахалăхне лайăхлатма, ĕç тухăçлăхне хăпартма обязательствăсем илчĕç.

Ертелсенче социалисăмлă ăмăрту сарăлсах пырать. Канаш районĕнчи „Майăн 1-мĕшĕ" йачĕпе тăракан сĕтел пукан тата диван сем тăвакан ертелти стахановецсем А. Блинова Марейĕв йулташсем 1-мĕш квартал планне 240 процентпе, И. Царегородцев йулташ 281 процент, С. Макарăв 270 процент, В. Михайлăв 260 процент тултарнă. Вĕсем халĕ тата лайăхрах ĕçлеме тăрăшаççĕ.

Кшавăшри чапта çапакан ертелти (Ишлей р.) Антон Григорйĕв йулташ квартал планне 145 процент, Ишекри промысла ертелĕнчи Афанаçи Колцов йулташ 150 процент тултарнă. Вĕсем апрель уйăхĕнче те плана кулленех тултарса пыраççĕ, май уйавĕччен икшер норма тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

Енĕшкассинчи ертел членĕсем (Трак р.) уйавчен урамсене, кил-çуртсене тасатса йĕркене кӳртеççĕ. Митинг пулмалли вырăна трибуна тăваççĕ. Çав трибунă сывăхне виçĕ радиорупор лартаççĕ. Çавăнтах сцена пулать. Унта физкультура кружокĕпе шавлă оркестр хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ.

Н. Йашков.

Шупашкарти „Красный мебельщик" тата „Кооператор" промысла ертелĕсем Май уйавне хатĕрленессине плансем туна. Халĕ çав план тăрăх хатĕрленӳ ĕçĕ пырать.

Икĕ ертелĕнче те драмкружок членĕсем Май уйавне спектакльсем лартма хатĕрленеççĕ. „Красный мебельщик" ертелте уйав кунĕсенче Арскин „Шпион" тата Ульйанăвскин „Большой путь" пйессăсене лартса параççĕ. Халĕ кашни кунах репетицисем пулса иртеççĕ.

Кунсăр пуçне тата струнла оркестр (руководителĕ Пономарйов йулташ) тĕрлĕрен йурăсем вылйама вĕренет.

„Кооператор" ертелри драмкружок членĕсем „Гость" йатлă пйеса лартма хатĕрленеççĕ. Ачасенчен организациленĕ физкультура кружокĕ упражненисем тума вĕренет.

Плакатсем, лозунгсем çырассине, ӳкерчĕксем тăвассипе те ĕçе тытăннă. „Кооператор" ертел кӳçкĕскирен касса лозунгсем çырать, çавăн пекех Ленин тата Сталин йулташсен сăнĕсене тăваççĕ. Стена хаçат макетне те кӳçкĕскипе илемлетсе туна.

Х. Л.

Октябĕр 12 çул тултарнă уйав йачĕпе тăракан колхоз хирĕсенче (Днепропетровск облаçĕ, Акимăвск р.) дизеллĕ „Сталинец—65" трактăрсем ĕçлеççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Акимăвск МТС-чи С. А. Власенко трактăрисăн стахановла аггрегачĕ урпа акать. Власенко йулташ аггрегачĕ нормăпа 75 гектар акас вырăнне 95—100 гектар акать.

В. Малышĕв фото-ӳкерчĕкĕнчен (Сойузфото).

ТИМĔРÇĔ ЦЕХĔНЧЕ

Гудок сасси иккĕмĕш хут цехсем тăрăх йанрама пуçларĕ. Унччен те пулмарĕ сывлăш вăйĕпе ĕçлекен мăлатук шатăртаттăра пуçларĕ. Вакун ăшĕнче, айĕнче, вакун тăррипче,—пур çĕрте те çынсем ĕçлеме пуçларĕç.

Чернухин, Стерликов тата Лукойанов вакун кăшкарне тăваççĕ, урайне сараççĕ. Теприсем урăх ĕçсене тăваççĕ. Кăнтарла иртни 4 сехет çитнĕ тĕле вакун хатĕр. Вара ăна сăрлама тытăнаççĕ...

Пилĕк сехетре йусанă вакунсене техникăла контроль пăхса çӳрет. Чернухин ушкăнĕн вакунне пăхаççĕ. А. Никитин—стольăрсен мастăрĕ, вакуна темĕн пек тĕплĕ пăхса та пĕр айăп тупаймарĕ.

Никитин вакун йусас ĕçе тĕплĕн пĕлет. Вăл хăй стольăр, унтан бригадир пулса ĕçленĕ. Унăн пултарулăхĕпе ĕçе пĕлнипе кура, ăна мастăр пулса ĕçлеме лартнă. Никитин производствăра кăна мар, обществăлла ĕçре те хастарлăн ĕçлет.

Чернухин йулташ комсомол ретне кăçал çеç кĕнĕ. Анчах вăл комсомолецăн ĕçре лайăх пример кăтартмалине йалан асра тытать. Йулташсемпе ăмăртса ĕçлет. Апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне вăл хăйĕн группипе 16 вакун йусанă.

Савăт коллективĕн ĕмĕчĕ: апрель уйăх программине тултарса, май уйавне çитĕнсемпе уйавласси. Вакунсем йусакан цех хăйĕн программине тултарассишĕн вирлĕн кĕрешет; апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне 171 вакун йусаса каларнă тата автотормăсла вакунсем 92 йусанă (уйăхра ăна 115 вакун йусамала).

Тимĕрçĕ цехĕ лайăх тухăçлăхпа ĕçлет. Вăл, цех плана кашни уйăхрах тултарса пырса, савăтри куçса çӳрекен хĕрлĕ йалава илме тивĕçлĕ пулчĕ. Демейтăв йулташ йертсе пыракан тимĕрçĕсен бригади нормăна 500—600 процент таран тултаракан пулчĕ.

Н. Николайĕв.

ДЖАМБУЛ

Казах халăхĕн йурăçи, орденоносец

САПКА ЙУРРИ

Çывăр, чĕппĕм, канлĕ пул,
Тăмрипе вылйать Джамбул.
Ырă аллипе суйлать вăл
Саншăн йĕс хĕлĕхсене.
Сапкуна йарăнтарать вăл,
Шăппăн йура та йурлать вăл,
Çывратасчĕ-ха тесе,
Хăйĕн пĕчĕк пепкине.

Сенкер çăлтăр телĕрет.
Инçетри джайлйауре[1]
Телереççĕ вылйăхсем
Çăмламас качакасем,
Тевесен пăрушсем,
Ылттăн тĕслĕ тыхасем те,
Мăкли пуçлă пăрусем те,
Пăтăр-пăтăр пӳтексем те,—
Телĕр ес те, ман пепкем.

Лепĕшсем çăран çинче,
Пулăсем шыв тĕпĕнче
Хускалмасăр телереççĕ.
Телĕрет шыв хĕрринче
Хăмăш та пуçне пĕксе,
Сывлăм сыпнă чечексем,
Кӳлĕсем, çеçенхирсем,—
Пурте лăпкăн телĕреççĕ.
Меншĕн телĕрместĕн есĕ,
Хура куçлă ман пепкем?
Çывăр пĕчĕкçĕ пепкеçĕм,
Çирĕп алăра халь есĕ,
Сталин çутă Кремĕлтен
Пĕтĕм çĕршыва курать.
Вăл курать, пепкем, сана та,
Вăл савать, пепкем, сана та,
Çĕршывăм ответ тытать
Саншăн, пĕчĕкçĕ пепкем.
Аслă, çĕршыв ывăлĕ есĕ,
Савнă пĕчĕкçĕ пепкеçĕм.
Аçунтан та ытларах
Шухăшлать халь Мускавра
Аслă Сталин сан çинчен,
Вăл сана йалан телейлĕ,
Ăслă, сывлăхлă, кĕрнеклĕ
Ӳстересшĕн çĕр çинче.

Пит телейлĕ ес, пепкеçĕм,
Çĕршывран илетĕн есĕ
Пĕчĕкрен мĕн кирлине,
Ес унран телей илетĕн,
Çирĕп шухăш, ăс илетĕн,
Çирĕп сывлăх, вăй илетĕн
Çĕнтерме тăшмансене.
Тĕнче аслă умăнта сан,
Çулсем уçă умăнта сан.
Саншăн йешĕл çатсенче
Ереветлĕн шăпчăксем
Хӳхĕм йура ĕнереççĕ.
Симĕс улăп-çарансем,
Хурçă улăп-савăтсем,
Ылттăн, ĕнчĕ[2], шахтăсем,—
Пурте сан вĕсем, пепкеçĕм.

Куçусем сан çăлтăртан та
Çутăрах, çут пурçăнтан та
Çемçерех сан çӳçусем.
Çитĕнетĕн ес кĕрнеклĕн,
Çĕршыва илем кӳрсе,
Пурăнăн йалан телейлĕ
Есĕ—хура куçлăскер,
Калама çук чиперскер,
Харсăр паттăр пуласскер.

Епĕр ӳсне урăхла.
Епĕр ӳсне йыталла.
Май хĕвелĕ айĕнче
Çуткам питлĕ ачасем
Хĕрлĕ йалавсене çӳлĕ
Çĕклесе вĕлкĕштерсен,
Чĕтренет тумлам куççулĕ
Ват старикĕн куçĕнче.
Ӳссе çитĕн, йĕкĕт пул,
Умăнта сан çутă çул.
Çĕршыв тăрăх саванса,
Çĕнтерӳлĕн, пултарулăн,
Тӳррĕн кайăн ес утса:
Йара пионер та пулăн,
Харсăр комсомолец пулăн,
Ӳсĕн большевик пулса.

Çывăр, пĕчĕкçĕ казах,
Çĕршывра текех пачах
Хуйхă пулмĕ,—аскерсем[3]
Тимлĕн, çирĕп хуралласçĕ
Санăн аслă çĕршывна.
Аслă Сталин, совет влаçĕ,
Йуратса, хисеплесе,
Чи телейлĕ пурнăç пачĕ
Çамрăка та ватăна.

1937 **Н. ЙАНКАС куçарнă.**

1 Джайлйау—çулахи кĕтӳ кĕтмели вырăн.

2 Ĕнчĕ—хаклă йышши чул.

3 Аскерсем—красноармейĕцсем.

И. И. Стебун

Михайло Коцӳбинский

Украинă литературин класçикĕ, писатĕл-демократ Михаил Михайлович Коцӳбинский вилни 25 çул тултарчĕ. Коцӳбинскин сывăх тусĕсенчен пĕри—А. М. Горький ăна асăнса çапла çырнă:

„Илемлĕхпе ырăлăх çинчен калакан шухăшсен тĕнчинче вăл—„хамăр" çын, тăван çын, вăл малтанхи тĕлпулу хыççăнах сана хăйпе çыхăнтарса хурать, ăна вара час-часах курса калаçас килекен пулать...

Вăл йалан пекех демократи çинчен, халăх çинчен калаçма йуратăтчĕ, ăна итлеме йаланах темле кăмăллăччĕ, кăмăллăччĕ те вĕрентӳлĕччĕ унăн калаçăвĕсем".

Ку йĕркесенче Коцӳбинскин тĕп йенĕсене уççăн та чăнлăхлăн кăтартса панă. Коцубинский етеме чунтан йуратнă, икĕ чăн-чăн етемле туйăм пулнă унра: йурату тата кураймалăх. Вăл етемлĕхе, халăха пĕтĕм чун-халĕпе йуратнă, вăл унăн вăйне, халăх идеалĕсем çĕнтерессе ĕненсе пурăннă. Çав вăхăтрах вăл етемлĕхпе прогресăн тăшманĕсене пĕтĕм чун-халĕпе кураймăн. Патша влаçĕ, помещиксемпе капиталиссен çиçтеми, халăха пусмăрлама, етем тивĕçлĕхне хĕстерсе, çынна тарçă тума пулăшакан йăла ăна йут пулнă. Писателĕн йуратăвĕпе кураймалăхĕ унăн произведенийĕсенче пысăк вырăн йышăнаççĕ: тарăн лирикăпа çивĕч сатирă Коцӳбинскин творчествинче тĕп елементсем пулса тăраççĕ. Вăл халăх паттăрĕсем çинчен çав тери ăшă кăмăлпа çырнă. Çав вăхăтра халăхшăн йут лагĕре—етемлĕхĕн тăшманĕсене: патшасене, пупсене, националиссене, буржуалă либералсене курăймасть, вăл вĕсем çинчен çиленсе тăрăхласа çырать. Ăна епер „Он идет", „Смех", „Хо", „Лошади не виноваты" т. ыт. произведенисенче лайăх куратпăр.

Коцӳбинский—писатĕл-демократ тата гуманис. Вăл тĕнче литературипе искусствин чи лайăх ӳсĕмĕсене вĕренсе пырса, çӳлĕ художествăлă реалисăмла литературăн класçикла пахалăхĕсене тума пултарнă. Унăн 1905 çулхи буржуалă-демократилĕ революци пулнă тапхăрти Украинă йалĕн пурнăçĕпе кĕрешӳвне çутатса паракан „Фата Моргана" йатлă епопейă-повеçĕ тивĕçлипех тĕнче литературине класçикла произведени пулса кĕнĕ. Горькин „Мать" повеçĕн тематикипе сыхăннă „Фата Моргана", хăйĕн сăнлăхĕсемпе Украинă халăхĕн пурнăçĕпе кĕрешӳвĕн историлĕ страницисене ĕмерлĕхе манми туса хăварчĕ. Унта революцичченхи патшан крепăçла çиçтемин условийĕсенче тертленсе пурăннă хресченсен йăвăр пурнăçĕ ӳкерĕнсе йулнă. Ахальтен мар ĕнтĕ Л. М. Каганович Украинăри большевиксен коммунисла партин 10-мĕш съеçĕнче каланă сăмахĕнче революцичченхи Украинă хресченĕсен пурнăçĕ çинчен каланă вырăна Коцӳбинский çырнă „Фата Моргана" повеçĕн сыпăкĕсемпе иллюстрациленĕ.

Хăйĕн революцилĕ новеллисенче Коцӳбинский патша пусмăрне тата ăна пулăшса тăракан чиркĕве тата буржуалă либералсене, вĕсен çинчен маскăна илсе пăрахса, тăрă шыв çине кăларнă. Вĕсем халăха хирĕçле реакцилĕ вăй пулса тăнине кăтартса панă.

Жандармерипе цензура тем пек хĕснĕ пулсан та, писатĕл-демократ Коцӳбинский хăйĕн çивĕч перине пĕр минутлăх та пăрахман, хăйĕн пурнăçĕн йулашки кунĕсем сывхарса киличченех хăйĕн тăван халăхĕн чĕререн парăннă, тӳрĕ кăмăллă ывăлĕ пулнă.

Йăвăр та хурлăхлă пулнă унăн пурнăçĕ. Коцӳбинский чухăн чиновник çемйинче (1864 çулта) çуралса, мĕн пĕчĕкренех нушалă пурнăçра ӳснĕ. Вĕренме кайма май тупайман пирки вăл хăй тĕллĕн, килте вĕреннĕ. Пите нумай вуланă.

Фурйе, Фейербах, Чернышевский, Шевченко, Вовчок т. ыт. писатĕлсен произведенийĕсем çамрăк ачан чĕринче социалисăма йуратассине çуратнă. Вăл, йалта пурăнса, куллен хресченсен пурнăçĕпе çыхăнса, выçă антăхса пурăнакан хресченсене, тĕттĕмлĕхе, помещик пусмăрĕнчи йăвăр ĕçе хăйĕн куçĕсемпе курнă. Украинă халăхĕн хурлăхпа, куççулпе тулнă йуррисене итленĕ, вĕсем пулас писатĕлĕн чĕрине ыраттарнă. Мĕскĕн ачан чĕринчи палăрмасăр тăракан поези хĕлĕхĕсене вăй кĕртнĕ. Вĕсем йанрама тытăннă. Çапла вара Михайло Коцӳбинский халăх творчествипе усă курса, сăвăсем çырма пуçланă. Ку унăн творчествин малтанхи утăмĕ пулса тăнă.

1884 çулта Коцӳбинский Украинă чĕлхипе „Андрей Соловейко" йатлă пĕрремĕш прозăла произведени çырать. 1891 çулта унăн калавĕсем пичетре тухма пуçлаççĕ. Çапах та вăл писатĕл ĕçĕпе çеç пурăнма пултарайман. Кил-йышне тăрантарса усрас тесе, унăн служба ĕçĕнче те пулмала пулнă. Коцӳбинский учитĕл пулса ĕçленĕ. 1892—1897 çулсенче Бессараби тата Крым таврашĕнчи виноград йăваççисене сийенлекен хуртсемпе кĕрешес тĕлĕшпе организациленĕ тĕпчев ĕçĕн службинче тăнă. Унта вăл тутар тата молдаван хресченĕсен йăвăр пурнăçĕпе паллашать. Ăна вăл „Для общего блага", „Ведьма", „В сетях шайтана", „На камне", „Под Минаретами" т. ыт. калавсенче витĕмлĕн çырса кăтартать.

Коцӳбинский çырнă произведенисен демократилĕ йенĕ полицине çавăрăнтарса пăхтарать: унăн нумай произведенийĕсене Украинăра сарма ирĕк паман. Çапах та вăл Украинăра паллă писатĕл пулса тăрать. 80—90 çулсенчи Украинăн паллă класçик писателĕ тата литература критикĕ Иван Франко, Коцӳбинскине, 90 çулсенчи прозаиксем хушшинче пĕрремĕш вырăна лартса, пысăк хак панă.

1897 çулта Коцӳбинский Чернигăва куçма шутлать, анчах губернатăр ку ыйтăва хирĕçлет, вăл Коцубинский „сийенлĕ шухăшлă", революцилĕ кăмăллă пулни çинчен пĕлнĕ пулнă. Ирĕксĕрех вара Коцӳбинскин, Житомире куçса, выранти „Волынь" хаçат кантурĕнче ĕçлеме тивнĕ. Провинци хаçачĕн страницисенче „Свет и тени русской жизни" йатлă пайа йĕртсе пырать. Хăйĕн çивчĕ публицистикăлă статйисенче патша влаçĕн ирсĕр политикине, капиталиссем ĕççыннисене експлоатациленине, вак халăхсене—калмăксене, йакутсене т. ыт. пусмăрланине тăрă шыв çине кăларса тăнă.

Йулашкинчен, 1898 çулта Коцӳбинскине хăйĕн çемйи пурăнакан Черниговăна куçма тӳрĕ килет. Кунта вăл Черниговă кĕпĕрнин земствин статистикăла бӳровĕнче статистик пулса ĕçлеме тытăнать. Статистикăн кулленхи йăвăр ĕçĕ писатĕлĕн мĕн пур вăхăтне çатса пынă, унăн унччен те начар пулнă сывлăхне пушшех вăйсăрлатнă, шалувĕ пысăк пулман: кунта ĕçленисĕр пуçне ытти çĕртен те ĕç илмеле пулнă.

Çав вăхăтрах писатĕл хăйĕн литературăлă ĕçне те тунă.

Коцӳбинский, писатĕл-демократ пулса, 1905 çулхи революцилĕ событисем çинчен чи лайăх произведенисем çырать, вĕсенче вăл революцине уççăнах саламлать („Фата Моргана"), çав вăхăтрах хăйĕн çивĕч перипе хура реакцин апостолĕсене хирĕç тăрать. Горький хыççăн Коцӳбинский те революцин кулленхи темине çĕклет, либералисăмăн ултавлă, контрреволюцилĕ ĕçĕсене питлет.

Коцӳбинский Горькипе паллашасси ăнсăртран пулман. Украинăри буржуалă-националисла литератăрсем хушшинче хăйне уйрăм тытма йуратакан Коцӳбинский Горькире хăйпе пĕр шухăшлă писатĕл-революционера курнă. 1909 çулта Коцӳбинский Горький патне Каприне кайать.

Писатĕлсем малтанхи тĕлпулура пĕрне-пĕри хытă йуратса пăрахаççĕ, туслашаççĕ. Çакăн хыççăн Коцӳбинский виçĕ çул хушши умлă-хыçлăх Каприне кайса тăнă. Горькипе çырусем çӳретни, тĕлпулса калаçнисем Коцӳбинскине пурнăçра та, творчествăра та пысăк усă панă.

А. М. Горький, Коцӳбинскине пысăк хак параканскер, Украинă писатĕлĕн произведенийĕсене вырăсла кăларассине пуçараканĕ пулнă. Вăл сĕннипе издатĕлсен йулташлăхĕ—„Знание", Коцӳбинский çырнисен икĕ томне вырăс чĕлхипе пичетлесе кăларнă.

Пĕрремĕш том пичетрен тухнă хыççăнах Горький Коцӳбинский патне çапла çырнă:

„Сирĕн кĕнекене килленеç, чунтан саванса вуласа тухрăм". Аслă писатĕл çапла хак пани Коцӳбинскине хавхалантарнă тата савăнтарнă. „Сире килĕшет пулсан, апла çырма йурать"—тесе ответленĕ вăл Горькине.

Горький пекех Коцӳбинский те хăй йĕри тавра талантлă çамрăк литератăрсене пĕтĕçтерсе, вĕсене чăн-чăн демократилĕ, халăх литературине тăвас çулпа кайма вĕрентнĕ. Çав çамрăксенчен вăл пуринчен ытла халĕ „Совет Украинин пысăк сăвăçĕ пулса тăракан Павло Тычина çине çавăрăнса пăхнă. Ун чухнех унăн пулас пултарулăхне туйса илнĕ Коцӳбинский.

Ку вăхăт—Украинă класçикĕн кун-çулĕн йулашки çулĕсем пулнă. Писатĕлĕн йăвăр условийĕсенче пурăнса, йăвăр ĕçсем туса хавшанă сывлăхĕ вĕсне çитсе пынă. 1913 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче Коцӳбинский вилсе кайнă.

Украинăри националиссемпе черносотенецсем Коцӳбинский вилнишĕн тем пек савăннă. Халăхăн аслă йурăçи çинчен тĕрлĕ елек сарнă, чаплă писатĕлĕн йатне манăçа хăварасшăн пулнă. Паллах, темле тăрăшсан та, вĕсем ăна тума пултарайман. Украинă ĕççыннисем хăйсен йуратнă писатĕлĕн йатне çӳлеле çĕкленĕ. Алексей Максимăвич Горький уй чухне каланă сăмахсем, националисла çĕлен-калтасене çирĕппĕн ответ панă пекех, пĕтĕм халăх сасси, демократи сасси пулса писатĕл раскалĕн малашлăхне пĕлтерсе йанранă:

„Украинă пысăк çынна çухатрĕ, нумай тата лайăх астуса тăрĕ вăл унăн ырă ĕçне".

Патша стройĕшĕн вилнĕ Коцӳбинский те хăрушă пулнă. Ăна пытарнă чухне полици сыхласах тăнă. Çава çинче сăмахсем калама чарнă, семинариссен хорне йурлама тата хĕрлĕ „лентăсем çĕклесе пыма та ирĕк паман. Çавăнпа пĕрлех писатĕлĕн йатне асăнма та чарнă пулнă.

Коцӳбинский хăйĕн творчествипе Украинă поезин историнче çĕнĕ страница уçнă, илемлĕ литература сăмахне çӳлĕ вырăна çĕкленĕ. Вăл ĕççыннисен сарлака массисен шухăшĕсемпе кăмăлĕсене тата вĕсен революцилĕ турттăмне палăртса çырнă.

Чехословакире майӑн 1-мӗшне иртерме хатӗрленни

Прага, апрелӗн 25-мӗш. (ТАСС). Чехословаки компартин органӗ „Роте фане" хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, выранти коммуниста тата социал-демократла организацисемпе ӗҫ-ҫынни организацийӗсем майӑн 1-мӗшӗнчи демонстрацине мирлӗ самана, республикӑна тата демократине хӳтӗлес лозунгсемпе пӗрле туха пысӑк кӑмӑлпа пулӑшма шутланӑ. Чехословакин пур. кӗтесӗсенче те пӗлтерӗҫҫӗ. Партсьдорфра компартин, чехсен социал-демократла партийӗн социалиссен выранти организацийӗсен представителӗсен пӗрлехи ларӑвӗ пулса иртнӗ. Унта майӑн 1-мӗшӗнчи демонстрацине пӗрле туса ирттерме йышӑннӑ.

Англири ачасен ӗҫӗ

Англин „Дейли Геральд" хаҫачӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Лондонри кинотеатрсенче ӗҫлекен 23 пин ачасенчен ҫиччӗ пиншӗ ернере 72 сехет ытла (пӗр кунта 12 сехет ытла) ӗҫлеҫҫӗ. 10 пинӗ йӑхӑн ачасем мӗн тӗттӗм пулаччен ӗҫлеҫҫӗ. Манчестерти кинотеатрсенче ӗҫлекен ачасем час-часах ернере 84 сехет (пӗр кунта 14 сехет) ӗҫлеҫҫӗ.

Ачасен пӑвӑр пурнӑҫӗ ҫинчен ҫак факт та лайӑх каласа парать: пӗр кинотеатрти хуҫасем вӗсем патӗнче ӗҫлекен ачана вӑл ӳсӗ пирки ӑна хуҫа костюме тӑвартма пӑрахса хӑварнӑ. Унӑн выранне тепӗр ачана илнӗ, анчах малтанхи ача тахҫанӑ хуҫа костюме тавӑр пулмай. (ТАСС).

Японии захватчикӗсен тискерлӗхӗ

Лондонран пӗлтернӗ тӑрӑх, апрелӗн 23-мӗшӗнче Японин самолючӗсем Кантон патӗнче Китайӑн ике пӑрахутне ҫине бомбӑсем пӑрахсă, вӗсене шыва путарнӑ. Пӑрахутсем ҫинче 100 пассажир йӑхӑн пулнӑ. Таватă пассажир ҫеҫ чӗррӗн юлнӑ. Пӑрахутсем ҫинче мирлӗ пурӑнакан граждансем пулнӑ, вӗсем хушшинче хӗрарӑмсемпе ҫамрӑк ачасем те нумай пулнӑ. (ТАСС).

Краснохолм кӗперӗсем урлӑ каҫса ҫӳреме пуҫланӑ

Майӑн пӗрремӗшӗнче Совет Союзӗн хӗрлӗ столици чаплӑ парнесем илет — Мускав йуханшывӗ ҫинчи виҫӗ ҫӗнӗ кӗпер ӗҫе кӗрет.

Апрелӗн 25-мӗшӗнче, ҫӗнӗ кӗперсене Мускав йуханшывӗ урлӑ хывнӑ Пысӑк Краснохолм кӗперне тата шыв уҫса пӑракан канал урлӑ хывнӑ Кӗҫен Краснохолм кӗперне туса пӗтерсе ӗҫе кӗртнӗ. Пысӑк кӗперен проҫӗнӗ йӑлавӗсемпе, лозунгсемпе партипе правительство руководителӗсен тата чи лайӑх стахановецсен портречӗсемпе илемлетнӗ. Кунта кӗпер тӑвакансемпе Кировски, Пролетарски тата Тагански районсенчи ӗҫҫыннисен нумай пин ҫынлӑ митингӗ пулса иртнӗ.

Митингра пулнисем Сталинпа Молотова йулташсем патне салам ҫырусем янӑ. (ТАСС).

Ҫитӗннисен шкулӗнче

Улӑх Шӑматри (Йӗтӗрне р.) „Колхозник йулташӗ" колхоз ҫуммӗнче уҫӑннӑ ҫитӗннисен шкулӗнче 49 ҫын вӗренсе тухрӗҫ. Веренуре Михайлова, Семенова, Митрийкова, Йефимов, Ананйева йулташсем аван ӗлкӗрсе пычӗҫ.

Рябиновски.

Совет Союзӗн курорчӗсем

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Сочири „Правда" санаторин сывӑрмали ҫӗнӗ корпусӗ.

Й. Хелмер фото-ӳкерчӗкӗнчен (Союзфото).

„Слово о полку Игорове" 750 ҫул тултарнӑ тӗле

Кӑҫалхи май уйӑхӗнче Совет Союзӗ литератури паха памятникӗн — „Слово о полку Игорове" произведени 750 ҫул тултарнине паллӑ тӑват.

„Слово о полку Игорове" произведенийе Кийевски Руҫре паллӑ мар автор — Новгород-Северски кнаҫ Игорь Святославич хӑйӗн Трубчевскри шӑлнӗ Всеволодпа, Путивлӗри ывӑлӗ Владимирпа тата Рыльскри племянникӗ Святославпа Ольговичпа половецсене хирӗҫ аннӑҫҫӑр поход туни ҫинчен ҫырнӑ. Вӑл поход 1185 ҫулхи апрелӗн вӗҫӗнче тата майӑн пуҫламӗшӗнче пулса иртнӗ.

„Слово о полку Игорове" произведенийе — XII-мӗш ӗмӗр памятникӗнче — вырӑссен авалхи памятникӗсене йуратакан тата тупса пуҫтаракан А. Н. Мусин-Пушкин 1795 ҫулта тупнӑ пулнӑ, вӑлах ӑна 1800 ҫулта пичетлесе кӑларнӑ. Ҫак пите паха произведенийӗн пӗртен-пӗр кивӗ списокӗ те 1812 ҫулта Мускавра пушар пулнӑ вӑхӑтра ҫунса кайнӑ.

Малашне ҫак произведенийе нумай хутчен пичетлесе кӑларнӑ тата вырӑс тӗпченӳҫисем те, Хевеланӑҫ Йевропари тӗпчевҫӗсем те ӑнлантарса панӑ. Халь ӑна Йевропари тата славянсен пур чӗлхисемпе те (поляк, чех, болгар, серб т. ыт. чӗлхесемпе те) пичетлесе кӑларнӑ.

„Слово о полку Игорове" поэмӑра автор пысӑк хумханупа, чӑн чӑн граждански хурланупа тӑван ҫӗрӗн телейсӗрлӗх картинине сӳтатса панӑ. Ҫак телейсӗрлӗх кнаҫсен хушшинчи хирӗҫӳсем тата ҫынсен ӗмӗрне кӗскетекен, вырӑс ҫыннин пурнӑҫне пӗтерекен ҫапӑҫусем пирки пулнӑ. Автор генийӗ поэт ҫеҫ мар, хӑйӗн тапхӑрӗнче малти позицисенче тӑракан, тӑшмана отпор пама вырӑс халӑхӗн пур вӑйӗсене те пӗрлешмелле ченекен паллӑ публицист пулнӑ.

Хайсен тапӑнӑвӗсемпе вырӑс ҫӗрне йухӑнтаракан тата тӗрлӗ майсемпе вырӑс государствин хӑвӑтне хавшатакан тулашри тӑшмансенчен — половецсенчен тӑван ҫӗршыва хӳтӗлас, ҫӗрӗ ҫулӗ патриотисӑмлӑ идейӑна автор художествӑла вӑйпа пропагандӑлат. Ҫав политикӑлӑ агитаци произведени идейӑна шухӑшӗ пулнине, Ф. Энгельспа „Слово о полку Игорове" ҫинчен ҫӗрӗтне ҫырура, К. Маркс та паллӑ тунӑ.

Ҫак произведенин хакӗ пите пысӑк тата ӑнланула. Вӑл XI—XII ӗмӗрсенчи феодаллӑ Руҫ ҫинчен чӗрӗ тата пите тӗрӗс картинӑ парат.

Вырӑссен аслӑ поэчӗ А. С. Пушкин хӑйӗн пурнӑҫӗн йулашки ҫулӗсенче „Слово о полку Игорове" поэмӑна тӗплӗн вӗреннӗ. Вӑл унӑн художествӑла тивӗҫлӗхне пысӑк хак панӑ тата ӑна хӑйӗн ӑнлантарса ҫырнисемпе пӗрле пичетлесе кӑларма хатӗрленнӗ.

„Слово о полку Игорове" — геройла епосӑн паха памятникӗсенчен пӗри. Вӑл авалхи геройла епосӑн хаклӑ произведенийӗсемпе танлашат тата хӑйӗн художествӑлла хӑкӗпе Хӗвеланӑҫ Йевропари вӑтам ӗмӗрти епикӑлӑ литературӑн паллӑ произведенийӗсенчен те кайа мар. Ҫавӑнпа та, вӑл произведени 750 ҫул тултарнӑ йатпа пулас йубилейӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат.

Пирӗн кунсенче — Совет Союзӗ пӗтӗм тӗнчери мир политикине хӳтӗлесе, пирӗн ҫине тапӑнма хатӗрленекен фашисла вӑрӑ-хурахсене отпор пама вӑйсем пухнӑ вӑхӑтра, ҫак паха произведени уйрӑмӑнах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат. Вӑл произведенисемпе тӳсӗмлӗ вырӑс халӑхӗ йут ҫӗршывсенчи захватчик, сене хирӗҫ, хӑй никама пӑхӑнмасӑр пурӑнассишӗн кӗрешни ҫинчен художествӑлла образсемпе каласа парат.

Йулашкинчен, пирӗн ҫавӑн пек пуйан та тулли хаклӑ памятникӗн пулнӑ факт хӑй те, историлӗ авалхи тапхӑрта вырӑс культури, уйрӑмӑнах поетикӑлӑ культури, палӑрмалӑх аталанна пулни ҫинчен калат.

ССР Союзӗнчи Совет писателӗсен Союзӗ тата ССР Союзӗнчи Аслӑлӑхсен академийӗ „Слово о полку Игорове" 750 ҫул тултарнӑ йубилейа ирттерме хатӗрленеҫҫӗ. Йубилейра ҫак ӗҫсене тума палӑртнӑ.

Майӑн 25-мӗшӗнче Мускавра йубилей йачӗпе чаплӑ лару пулса иртет, ҫав ларӑва радиопа пӗтӗм Совет Союзӗ тӑрӑх парӑҫҫӗ. Йубилей умӗн, майӑн 24-мӗшӗнче, Мускавра „Слово о полку Игорове" йачӗпе пысӑк выставкӑ уҫалат. Выставкӑри нумай хисеплӗ материалсем (алҫырӑвӗсем, авалхи изданисем, куҫарнисем, живопиҫ, скульптура) ҫав генилле произведенийӗ тата ӑна туна вӑхӑтри епоха мӗнле историлле вырӑн йышӑннине сутатса парӑҫҫӗ.

„Князь Игорь" йатлӑ операна йубилей вӑхӑтӗнче ҫӗршыври пур опера театрӗсенче те лартӑҫҫӗ.

Совет писателӗсен Союзӗ ССР Союзӗнчи Аслӑлӑхсен академийепе пӗрле „Слово о полку Игорове" йубилейла сборникне кӑларат. Сборникре ҫав произведенийе куҫарусем пурӗ 11 чӗлхепе пулаҫҫӗ, вӗсенчен 7-шӗ — революцичченхисем. Ҫав сборникри умстатйана тата ӑнлантарнисене Н. К. Грузин профессор ҫырат.

ССР Союзӗнчи Совет писателӗсен Союзӗн правленийӗн куҫаракан тата фольклор секцийӗсене „Слово о полку Игорове" произведенийе ССР Союзӗнчи халӑхсен чӗлхинӗ куҫарса кӑларас ӗҫе пуҫарса йертсе пыма хушнӑ.

Йубилей кунӗсенче ҫак поемӑн музыкӑлла тата художествӑлла сыпӑкӗсене радиопа парӑҫҫӗ. (ТАСС).

ТЕАТР
„Профессӑр Полежайӗв"

Чӑваш Академи Театрӗн вырӑс трупи „Профессӑр Полежайӗв" пйесӑна лартса, тата тепӗр курӑнула ӗҫ турӗ.

Пйесӑн тӗп геройӗ профессӑр-физик Полежайӗв — тӗнчипе паллӑ ученӑй. Вӑл — тӑван ҫӗршывӑн ҫулӑмлӑ патриочӗ. Вӑл ӗслӑлӑха — пӑнавлатасшӑн нумай ӗҫ тунӑ, ҫӗршыв умӗнче пысӑк хисепе тахҫанах тивӗҫлӗ пулнӑ. Анчах ҫав. тивӗҫе профессӑр Аслӑ Октабӗр революцийӗ ҫулмасӑр тума пултарайман. Октабӗр революцийе Полежайӗв профессӑр ӑшӑ кӑмӑлпа, пысӑк хавхалӑнупа йышӑнат. Революцин малтан кунӗнчех вӑл большевиксен майлӑ пулса хӑйӗн пӗтӗм вӑйне, кирлӗ пулсан пурнӑҫне те, революци ӗҫӗшӗн хума тупа тӑват. Кӑна вӑл ҫамахпа ҫеҫ мар, ӗҫпе кӑтартса парат: пысӑк ӗҫкенӗ кӑларат Полежайӗв. Кӗнеке уксӑмахӗнче чи малтанах революци ҫинчен, революци ҫеҫ пӗтӗм ӗтемӗҫӗхӗмӗрхи асаплӑхӑри хӑтарни ҫинчен, революци ҫеҫ ӗслӑлӑха чӑн-чӑн ӑслӑлӑх тума пултарни ҫинчен калат. Ку кӗнекене пикмарӑн малтан пролетари революцийӗн аслӑ ҫулпуҫӗ В. И. Ленин пысӑк хака хурат.

Революци вӑхӑтӗнче профессӑр Полежайӗв, хӑйӗн ватӑлнӑ шӑхмасӑр (вӑл 75 ҫулта), чӑн-чӑн общественник, хӗрӳллӗ агитатор пулса тӑрат. Вӑл кӗнеке кӑларнипе, хаҫатсене статйасем ҫырнипе ҫеҫ лӑплансе лармаҫт. Матроссем патӗнче лекцисем вулат, тӑшмансене ҫӗмӗрме вӑрҫа туха кайакан паттӑрсене аслӑна чухне хӗрӳлӗ сӑмахсем калат.

Профессӑра матроссем питӗ йуратаҫҫӗ. Ӑна Петроград совечӗн депутата суйласҫӗ. Полежайӗв профессӑран тавращӗнче унӑн чи йуратна тусӗсемпе, ӑна пур ӗҫре те пулӑшса пыракан арӑмӗ тата Бочарӑв доцентпа пӗрлех, тӑшмансем те йышӑса ҫӳреҫҫӗ. Ҫав тӑшмансем — кивӗ интеллигенции ҫӗрӗкӗсем. Вӗсем профессӑран ӗҫне тӗрлӗ майсемпе чӑрмантарма хӑтланаҫҫӗ, большевиксене хирӗҫ тӑмалла тесе хӳхӗлама тӑрӑшаҫҫӗ. Анчах профессӑр большевиксем тупса панӑ тӗрӗс ҫул ҫинчен пӑрӑнмаҫт. Вӑл тӑшмансене пӗр хӗрхенусӗр ҫӗмӗрет. Хӑй патӗнче нумай ҫул хушши доцент пулса ӗҫленӗ Воробйов сутӑнчӑка хуҫа кӑларат, ӑна тата унпа килӗшекенсене чӗрӗрен мыскарат. Мӗншӗн тесен Полежайӗв пӗлет: Воробйовпа унӑн йулташ пӗсем — кивӗ тӗнчен кайашӗсем, наукӑна нимӗн усӑ та пама пултараймансем, кӳпӗлтисем, вӗтем революци тӑшманӗсем.

Полежайӗв профессӑр тӗрӗс ҫул ҫинче. Унӑн ҫулӗ — совет интеллигенцийӗн ҫулӗ. Вӑл хӑй совет интеллигенцин чи аслӑ та паттӑр представителӗсенчен пӗри. Пулашкинчен Полежайӗв телефон тӑрӑх, В. И. Ленин йулташпа калаҫат. Ватӑ профессӑр ҫак калаҫу хыҫҫӑн пиххӑҫанхинчен ытларах хавхаланат. Аслӑ ҫулпуҫӗпе калаҫни ӑна ҫӗнӗ ӗҫсем вайхӑват парат.

Ҫапла, ку пйесӑн содержанийӗ тулли те пысӑк. Вӑл нумай ӗҫ ҫинчен — пӗтӗм этемлӗх умӗнчи пархатарлӑ ӗҫ ҫинчен калат.

Профессӑр ролӗпе артис Праудин, профессӑр арӑмӗн ролӗпе артискӑ Камле йулташсем пысӑк ӑстӑрлӑхпа выляҫҫӗ. Ҫаван пекех доцент Бочарӑв ролӗпе артис Козоровицкий пит те лайӑх калаҫлӗ.

Выляканссен ситмелӗхсенчен ҫакна асӑрхаттарас хӑвармала. Артис Лубимӑв йулташ (доцент Воробйов ролӗпе выляра) хӑйӗн ролӗне хатӗрлесе кирлӗ пек тӑрашса ӗҫлесе ҫитереймен. Вӑл кирлӗ мар сӗртех, такшипе хӑратас пек, кӑшкӑраша калаҫат, хӑласланкалат. Тӗрӗс каламала, сутӑнчӑк доцент образне Лубимӑв тӗплӗн, вӗҫне ҫитичен туса ҫитерейман.

Пӗтӗмӗшле илсен, спектакль лайӑх иртӗ, ӑна артиссен коллективӗ тӑрӑшса хатӗрленӗ.

Сергей Уворотӑв.

Кӗпер тумала

КАНАШ. Сухайкасси йалсоветӗнчи „Хӗрлӗ Чӑваш" колхоз ҫумӗнчен Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул сарса кайнӑ. Ун урлӑ лашапа каҫма май ҫук, кӗпер кирлӗ.

Хаҫан тӑваҫҫӗ-ши ку кӗпере?

Ленинград хатӗрленет
(Ленинградран килнӗ ҫыру)

Ленинград Майӑн I-мӗшне кӗтсе илме хатӗрленет. Культура сурчӗсенче лайӑх йурлаканӗсемпе ташлакансем конкурсӗсем пыраҫҫӗ. Хапрӑк-савӑтсенче художниксем тӗрлӗрен ӳкерчӗксем, сулпуҫсен портречӗсене ӳкерме тытӑннӑ. Композиторсем ҫӗнӗ йурӑсем, маршсем ҫыраҫҫӗ. Майӑн пӗрремӗшӗнче хула площадӗсенче хӑлӑх гуланисем пулаҫҫӗ. Сӑмахран, Ленинградӑн Урицкий йачӗпе тӑракан чи аслӑ та чаплӑ площадӗнче вуннӑран та ытла естрадӑсем тӑваҫҫӗ, естрадӑсенче йурлакансем, постановкӑсем пулаҫҫӗ. Прожекторсем ҫӗрӗпех ҫутатса тӑмала тӑваҫҫӗ. Володарский площадӗнче темиҫе ҫӗрте те каҫхине уҫӑ ҫӗрте кино кӑтартма екрансем хатӗрлеҫҫӗ.

Чечек сутакан мӗн пур магазинсенче темиҫе ҫӗр теҫӗ чечексем сутаҫҫӗ. Сӑмахран, кантӑр йенчӗ чечексене Батуми хулинчен 4 вакун илсе килеҫҫӗ.

Май уйавӗ йачӗпе хапрӑк-савӑтсене социалисӑмла ӑмӑрту сарӑлса пырат, производства плӑнӗсене тултаршипе тултарассишӗн рабочисем вирӗлӗн кӗрешеҫҫӗ.

1000 стахановец майӑн 1-мӗш тӗлне Мускава каяҫҫӗ.

А. Михайлӑв-Сидурай.

АТӐЛ ҪИНЧЕ

Атӑл шывӗ ку тарана ҫитсе 7 метр та 67 сантиметр тулма. Апрелӗн 25-мӗшӗнче 12 сантиметр тулна.

Апрелӗн 24 мӗшӗнче иккӗмӗш пристанӗ вырнаҫтарса лартнӑ, ӗнертен пуҫласа унта пӑрахутсем пырса тӑма пуҫларӗҫ. Пристань ҫинче багажсем усрамалӑ камера ӗҫлеме тытӑннӑ. Сыпӑх кунсенче пристаньӗн иккӗмӗш хутӗнче буфет, киоск тата хӗрлӗ кӗтес уҫаҫҫӗ.

Пулни-иртнисем

Апрелӗн 20-мӗшӗнче каҫхине Йолшик-Чемей йалӗнчи (Тутаркас р.) Г. Иванов тата Анаткас йалӗнчи (Йӗтӗрне р.) Ф. Гаврилӑв Шупашкарти Госпароходствӑ складӗнче ҫӗмӗрсе 1818 тенкелӗх промтоварсем вӑрланӑ. Вӑл таварсене вӗсенчен театр училищинчи охранник И. Филиппӑв илне те хӑйӗн хватерӗнче пытарса усранӑ. Халӗ вӑрлана йапаласене тупнӑ. Гаврилӑва, Иванова тата Филиппӑва арӗслене.

Ответлӑ редактӑр Н. М. СЕМЕНАВ.

МЕТРИЧЕСКИ ВИҪЕСЕН ҪЕРПУРИ МАСТЕРСКОЙӖ
(МАЛТАН ТАРАСА САВӐЧӖ ПУЛНӐ)

тимӗртен тунӑ тӗрлӗрен йапаласене йусама йышӑнат:

Виҫмелн тӗрлӗрен йапаласем, йалхуҫалӑх машинисем, пӑсна ӗҫлекен двигателӗсем йусама, тимӗрҫӗ слесӑр тата токарӗн ӗҫӗ тума, хурансем йусама, пӑхӑр тата йӗс савӑт-сапасене тума, електричествӑпа шӑратмалӑ ӗҫсене тума заказ йышӑнат.

МАСТЕРСКОЙРА ӖҪЛЕМЕ
бухгалтӗр, автомеханик, слесарсем тата тимӗрҫӗсем
КИРЛӖ

Адрес: Ҫӗрпӳ хули, тарасса савӑчӗ йе Шупашкар хули, Ленин урамӗ, 3. Чӑвашметровес.

ЧӐВАШШВЕЙСТРОЧСОЮЗА
союз системинче ӗҫлеме
аслӑ бухгалтӗр
тата
економист-финансист
КИРЛӖ

АДРЕС: Шупашкар хули, Калинин урамӗ, 49. Телефон № 1—45.

Шупашкарти кирпӗч савӑчӗн тытӑмӗ

Шупашкар, Ҫӗрпӳ, Трак, Йӗтӗрне тата ытти районсенчи колхозниксене тата йединоличниксене (1938 ҫулхи сезонра йединоличниксене) кирпӗч савӑтӗнче ӗҫлеме договӑрсем тунисене ӗҫлеме пыма чӗнет.

Кирпӗч ӗҫлемелли сезон пуҫланӑ.

Дирекци.

Академи театрӗнче

Апрелӗн 27-мӗшӗнче
Вырӑсла спектакль
Л. Н. ТОЛСТОЙ
АННА КАРЕНИНА

Аслӑ режиссӗр Г. В. Странский лартат.
Художник Йе. Н. Сапожникӑв.

Талон № 178.
Абонемент № 3, талон № 17.

ТАВАР ИЛЕКЕНСЕМ!!!

Май уйавӗ валлӑн чи лайӑх, тутлӑ кондитер таварӗсем илме „Бакалея" магазинне пырӑр. Унта есӗр Совет Союзӗнчи чи лайӑх хапрӑксенче („Красный Октябрь", Микоян йачӗпе тӑракан хапрӑк, Марат йачӗпе тӑракан, Бабайӗв йачӗпе тӑракан тата „Большевик" хапрӑксенче) тунӑ чи лайӑх суртла

конфетсем, монпансйе,
шеколадсем, печени,
карамельсем, премӗксем

ИЛМЕ ПУЛТАРАТАР.

Магазин ҫӑкӑр-булкӑсем:
ТОРТСЕМ, ПИРОЖНАЙСЕМ, КЕКССЕМ
тата ыттисене те пӗсерсе пама
ЗАКАЗСЕМ ЙЫШӐНАТ

Магазинра тӗрлӗ йышши хӗрлӗ ерехсем пур:
портвейн, мадера, токай, кагор, налив кӑсем, ликерсем, коньйаксем.

Халь кӳрсе килнӗ АПЕЛЬСИНСЕМ, ЛИМОНСЕМ пур.

Таварсене киле леҫсе пама заказ парӑр

Уйав умӗнхи кунсенче (апрелӗн 23-мӗшӗнчен пуҫласа 30-мӗшчен) магазин ирхине 7 сехетрен пуҫласа ҫурҫӗр ирттсен пӗр сехетчен ӗҫлет.

Заказсем памали телефон № 5—26.

„Бакалея" магазинӗ.

2—1

М. Капек
Ҫӑмӑрлӑ каҫ
(Лейтенант калавӗ)

Иртнӗ кӗркунне Кийеври Ҫар Округӗн маневӗрӗ умӗн пирӗн авиочасӗ пысӑк ҫӗрӗ хатӗрленме хушрӗҫ. Рейд тесе енер фронт урлӑ каҫса тӑшманӑн тылне ҫӗмӗрессине калатпӑр. Рейд йӑхсӑн пултар тесен, ӑна йалӑнах каҫхине тума лекет. Пирӗн ескадрили ҫурҫӗр тӗлӗнче ҫӑмӑр аеродрома ҫитсен улахса, хыр вӑрманӗ ҫинчен вӗҫрӗ.

Салтакӑм малтанах уйӑрчӗ. Епӗр пурте салтарӑ пӗлете пахса картӑпа компассарах вӗсемер. Икӗ сехетре полигон тӗлне ҫитсе бомбӑсене уйах ҫутине курӑнакан мишенсем ҫине пӑрахӑрмалла, ҫапла сӑмах парат. Анчах сапталӑн шанма ҫук. Ҫав каҫ пире уйӑх пулса аван урок пачӗ.

Кантӑр йенче ҫисем ҫисти курӑнчӗ. Ҫил вайлӑнсе ҫитрӗ. Самолет парханӑма пуҫланинчи сиремӗр: ҫӑмӑр килесси палӑрат. Асатнӗ ҫӑмӑр вӑхӑтӗнче вӗҫме пысӑк харушӑ. Ҫӗрлехи вӑхӑтра унӑн пек чухне тӗрлӗ инкек-синкексем сиксе тухма пултараҫҫӗ. Епӗр, ҫӑмӑрӑн малтан аеродром ҫине ҫитсе укес тесе, чу

кунсултан пӑрӑнса тӳрӗ ҫул тытрӑмӑр. Ҫил вӑйлӑн ҫӗмӗн вайланчӗ. Пирӗн пуша самолетсем тӗрлӗ май чӳхеме пуҫларӗҫ. Хирӗҫле ҫил хӑвӑрт вӗҫме чӑрмантарат. Ҫапах та ескадрилӗ сехетре 400 километра йахӑн вӗҫет.

Тӗм пек вӑскасан та тӑвӑллӑ ҫӑмӑр пире ҫул ҫинчех хуса ҫитрӗ.

„Кунтан вунпилӗк километра № авиобригадӑн лагӗрӗ пур. Ҫавӑнта лармалла хушатӑн. Стройран тухмасӑр ман хыҫҫӑн пырӑр!" — радиопа приказ пачӗ ескадрилӗ командирӗ.

Флагман самолетӑн хупарсене куҫран ҫухатмасӑр йеркелӗх вӗҫрӗмӗр. Сасартӑк ман самолет патӗнчех ҫиҫӗм ҫиҫрӗ. Куҫран вут-ҫул сирпӗнчӗ. Самолет ҫӳлтен пӑрахнӑ чул пек ҫӗр ҫине ӳкнине сиксе ӑнкартӑмӑр аврине мӗн пур вӑйпа хам патала туртрӑм. Самолет ҫӗр ҫине ҫапӑнна резинӑ мечӗк пек ҫӳлелле сикрӗ. Анчах айалта темӗскер шӑтӑртатрӗ. Приборсене сутатакан лампӑсем сӳнне пирки кайнерен унтарма лӑпкӑтарма сутатса пӑхрӑм. Ҫӗртен 50 метр ҫӳлӗшӗ кӑтартат.

Ман кабинӑна бортмеханик кӗчӗ.

— Аккумуляторсем ҫунса кайрӗҫ. Йӑвӑҫ тӑррине ҫакланнине, шӑссин сыптӑм йӗнчен ваннӑ, хӑрах урапа ҫӗре ӳкнӗ. Сулахай урапа ҫине лармалла лекет, — терӗ вӑл.

Епӗ ескадрилийӗ ҫырӑса пӗр вырӑнтах ҫаврӑнса 2000 метр ҫӳлӗшӗ хӑпартӑм. Ҫак вӑхӑтра тӗпӗр инкек сикс тухрӗ.

Есӗр „сывлӑш варинки" тӗнине илтнӗ пулӗ. Тӑвӑл вӑхӑтӗнче атмосферӑра сывлӑшсӑр „шӑтӑк" йулат. Самолет унта пӗксен пӑч тӗттӗмре утакан ҫын чӑнкӑ ҫырантан ҫырмана сикнӗ пек ҫӗрелле ӳкет. Епӗр те ҫав „сывлӑш варинкине" лекрӗмӗр. Пӗрре куҫ хупса иличчен пирӗн самолет ҫӗр ҫумнелех ӳкрӗ. Сывлӑш ҫеҫ хӑйарӑн улат. Регулятӑр аврине вулашки кунта ситечен туртса хупрӑм. Пирӗн селеке пула, „сывлӑш варинки" ҫӗр ҫумне лапчӑнна ӗлкӗреймен икен, самолет малтанхи пекех сасартӑк пӑрӑнса ҫӳлелле ҫӗкленме пуҫларӗ. Виҫсӗмӗр те ирӗккӗн сывлаcа ҫӑмка ҫине пӑхартатса тухнӑ тара шӑлса тиретрӗмӗр.

Ҫак вӑхӑтра штурмӑн № авиобригадӑпа сыхӑнса епӗр темле йал ҫийӗн вӗҫнине, сылтӑм йӗнчи урапа ҫитсе ӳкнине калаcа пачӗ. Часах пире вӑйлӑ прожекторсемпе шыраса тупса аеродром ҫине ҫул кӑтартрӗҫ.

Ҫӑмӑр чарӑнчӗ. Тӳпере ҫӑлтӑрсем курӑнма пуҫларӗҫ. Епӗр аеродром. Тӗлне ҫитсе ҫил хӑш йенчен вӗрнине кӑтартакан паланӑ ыпрама пуҫларӑмӑр. Иккӗ ҫаврӑнсанах хӑш йенчен вӗрнӗ аммалине пӗлтӗмӗр. Ман умра чи ответлӑ задача: самолета хӑрах урапа ҫӗре лартасси. Пӗртен пӗр урапа ҫӗре тивнӗ самантра сылтӑм елеронӑ кирлӗ таран усса самолета сулахай йенеле тайалтармала. Пӗр секунд кайӑрах йулсан — аварӗ пулаcси куҫ умӗнчех! Нихҫан та хӑрах урапа ҫине ларса курман пулин те епӗ пӗр хумханмасӑр ҫӗр ҫумне лапчӑнма пуҫларӑм. Тӗрӗс ӗҫлекен автомат пек йӑлсем кирлӗ рычагсене вӑхӑтра пусрӗҫ. Самолет йӗкӗр метр хушши хӑрах урапа ҫинче чупнӑ хыҫҫӑн чарӑнчӗ те хулен сылтӑм йенне ҫунатипа ҫӗре тӗкӗленчӗ. Епӗр ни бинасенчен тухнӑ ҫӗре йулташсем чупса ҫитрӗҫ. Ескадрилӗ командирӗ мана малтанах чуптурӗ.

Ку калава мана лейтенант. Высокос йулташ каласа пачӗ. Ҫак калав вӑл унӑн вӗсенчен пӗр тӑтӑкӗ ҫеҫ. Татах та нумай паттӑрлӑ ӗҫсем тунӑ Высокос йулташ. Сывлӑшра вӗҫнӗ чух вӑл татах та нумай-нумай мӑстӑрла тӗслӗхсем кӑтартнӑ. Кӑҫал ӑна правительствӑ Хӗрлӗ Йалав орденӗ пара наградӑланӑ.

Украина, 1938 ҫул.

УЙАВ УМӖНХИ ПАСАР

1938 ҫулхи апрелӗн 29-30-мӗш кунӗсенче
ШУПАШКАРТА
(симӗс) пасар площадӗнче
УЙАВ УМӖНХИ ПАСАР ПУЛАТ.

Государства тата кооперативла суту-илӳ организацийӗсем тӗрлӗрен таварсемпе тухаҫҫӗ.

Чӑваш АССР Суту-илӳ Халӑх Комиссариачӗ Шупашкар, Ҫӗрпӳ, Сӗнтӗрвӑрри, Тутаркас тата Ишлей районӗсенчи суту-илӳ пайӗсене хӑйсен районӗсенчи колхозсен, колхозниксем тата йединоличниксем йалхуҫалӑх продуктисемпе коопераци организацийе хушат.

Чӑваш АССР Суту-илӳ Халӑх Комиссариачӗ, Шупашкар хули, суту-илӳ пайӗ.

2—1

Уполномоченнӑй Чувашглавлита № 214 Гор. Чебоксары, Типографи № 1 Чувашполиграфтреста. Алҫырӑвӗсене кайала памаҫҫӗ.